Р1 21-25
П

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки.

Пĕтĕм тĕнчери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

А. С. Пушкин.

# ПОЛТАВĂ,

## виçĕ йурăллă поемă.

(Полтава, поэма в 3-х песнях).

На чувашском языке.

Чувашское Отделение Государственного Издательства,
КАЗАНСКОЕ ПОДОТДЕЛЕНИЕ.
Казань 1921 г.

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки.

Пĕтĕм тĕнçери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

А. С. Пушкин.

# ПОЛТАВĂ,

## виçĕ йурăлла поемă.

(Полтава, поэма в 3-х песнях).

На чувашском языке.

пер. Г. Т. Тихонов

Чувашское Отделение Государственного Издательства,
КАЗАНСКОЕ ПОДОТДЕЛЕНИЕ.
Казань 1921 г.

Р. В. Ц. Казань, печатать разрешается за № 800, 6000 экземпляров.

КАЗАНЬ.
Первая Государственная Типография
1921 г.

# Полтавă.

## Пĕрремĕш йурă.

Пуйан ђаплă Кођупей[1]).
Ун çаранĕсем пит аслă,
Виттĕр куçпа пăхсан та,
Вĕçĕ-хĕрри курăнас çук,
Ыталаса илес çук.
Çаран тăрăх ирĕкре
Ырă лаша ушкăнсем



Кĕтӳç тавăраш кĕтмесĕр
Курăк çисе çӳреççĕ.
Пăхăр Полтав хулине,—
Йĕри-тавра пур çĕрте,
Хула тавра кил-çуртсем[2])

---

[1]) Кођупей—Малораççейре пуçлăх пулнă.
[2]) Утарсем.

Сат пахҫисем варринҫе
Пытаннӑ пек лараҫҫӗ.
Пуйан ҫаплӑ Коҫупей
Ун пуйанлӑх хисепсӗр.
Хаклӑ йышши ыр тирсем,
Атлас йатлӑ пусмасем[1])
Пурҫӑн тумтир таврашсем,
Ылттӑн-кӗмӗл хисепсӗр,—
Питӗрӗнсе выртаҫҫӗ,
Курӑнса та тӑраҫҫӗ.
Анҫах пуйан Коҫупей
Пуйанлӑхпе мухтанмасть;
Вӑрӑм, ырӑ ҫилхеллӗ
Хӳхӗм, ҫаплӑ уҫӗсемпе
Вӑл мухтанса ҫӳремест:
Хайӗн ылттӑн-кӗмӗлӗпе—
Крымри тутар халӑхин
Куланайпе мухтанмасть;
Тӗпрен йулнӑ кил-ҫуртпа
Хӑпартланса ҫӳремест;
Ватӑ, ҫаплӑ Коҫупей
Хайӗн ҫеҫен хӗрӗшӗн
Ҫунтан вартан савӑнать;
Хайӗн хитре хӗрӗпе
Мӑн кӑмӑллӑ мухтанать.
Ҫӑн-ҫӑнахах Полтавра
Марйе пек хитре хӗр
Шырасан та тупас ҫук:

---

[3]) Атлас—пурҫӑн тӑла (пусма).

Çуркуннехи ђеђек пек,
Йешĕл вăрман хушшинђе
Ађашланса ӳсекен,
Ђĕрĕ, илем ђеђек пек,
Ӳсен ђеђен ырӑ хĕр.

Кейу хули патĕнђе
Йаштак çӳлĕ тиркĕсем[1])
Илемленсе ӳсеççĕ
Марйенĕн йаштăк пӳ
Йаштăк тирĕк вуллинђен
Пур йенђен те кайа мар.

Вăл утнине курсассăн,
Кӳлĕ тăрăх йерипе
Акăш ишсе çӳрени
Аса килет ђунăма.

Хăш ђух вăл йӳрăк пăлан пек
Утса çӳрет çăмăллăн.
Унăн кăкăрĕ кăпăк пек
Ђăлт шурăлса курăнаӳ.

Пиђĕ-куçĕ илемлĕ;
Вăрăм çивти пурçăн пек,
Шултра кăтра пайрака
Йĕри-тавра ун сăпне,
Хура пĕлĕт пек хуралса,
Илем кӳрсе ерешлет.

Хитре куçсем йăлкăшса
Çăлтăрсем пек курăнаççĕ.
Унăн ђипер тутисем,

---

[1]) Йăвăç.

Хĕрлĕ шăлан ҫеҫек пек,
Илемленсе курăнаҫҫĕ.

Марйене пур халăх
Ҫунтан мухтаŷ тĕлĕнсе.
Анҫах халăх тĕлĕнет
Ҫамрăк илемшĕн ҫеҫ мар:
Ăсĕ-хакĕ Марйенĕн
Сăнĕ-пуҫĕ илемĕнҫен.

Кăшт та, пĕртте кайа мар,
Ун ăсĕнҫен тĕлĕнсе,
Ыр кăмăлне мухтаса,
Пур ҫĕрте те пуплеҫҫĕ[1]).

Ҫапла ҫаплă хĕр патне,
Таҫтан ҫаплă каҫҫăсем,
Марйене ҫураҫма,
Хăтасене йараҫҫĕ.

Вырăс халăх ҫĕрĕнҫен,
Малораҫҫей ҫĕрĕнҫен,
Пур йенҫен те ун патне
Ҫаплă ҫĕртен каҫҫăсем.
Анҫах ҫеҫен Марйе
Усал тимĕр тăлăран,
Хăра-хăра тарнă пек,
Хăйне венҫет тăвасран,
Пĕр май тăраŷ хăраса.

Пур каҫҫăсем ахалех
Таварнаҫҫĕ килелле.
Ватă кетмăн Маҫеппă,

1) Калаҫаҫҫĕ.

Хӑйне валли ҫураҫма
Йараҭ унта хӑтасем.
Вӑрҫса, тертленсе
Лутӑрканса пурӑнса,
Кетмӑн пайтах ӗнтӗ ҫул.
Унӑн пайтах ватӑлнӑ,
Анӡах унӑн ӡӗринӡе
Шухӑш кӗрет ҫӗнӗрен:
Хӗре савса йуратаҭ.
Ҫамрӑк ӡӗре васкаса
Ҫунма пуҫлаҭ ҫулӑмпа,
Анӡах ӡасах вӑл сӳнет.
Ҫамрӑк ӡӗре йуратаҭ,
Йуратаҭ те ӡас манаҭ,
Унтан каллах йуратаҭ;
Ҫамрӑк ӡӗрен шухӑшӗ
Куллен-кунах урӑх май
Ватӑ ӡӗре апла мар;
Унӑн шухӑш ҫӑмӑл мар,
Вӑл васкаса парӑнас ҫук.
Ватӑ ҫыннӑн ӡӗрийӗ,
Пайтах вӑхӑт пурӑнса,
Вут ӡулӗнӡен кайа мар,
Хытса лараҭ пурнӑҫра.
Куҫа хупса уҫаӡӡен,
Унӑн ӡӗри шухӑшпа
Хыпса-ҫунса кайас ҫук.
Ватӑ ӡӗре йерипе
Кайа йулнӑ хӗм ҫулӑм,
Пурнӑҫ сӳнсе лараӡӡен,
Ним тусан та сӳнес ҫук.

Ӑмӑрткайӑк йăвăррăн
Вĕçнĕ сасса илтсессĕн
Хир кашаки хăраса
Сăрт хушшине пытанаӗ.
Çапла шешен Марийе,
Пĕшшен пуçпа хуйхăрса,
Мĕн пуласса шутласа;
Пур çынсеншен пытанса,
Утса çӳрет пӳлĕмре.
Марийенĕн амăшĕ,
Пĕтĕм шунтан çиленсе,
Пĕтĕм пӳпе шĕтресе,
Пырса тытса аллиншен,
Хĕрне калаӗ ак çапла:
„Ватă старик—намăссăр,—
Çылăха пĕлмен усал çын,
Мăшкăл тума шухăшлаӗ,
Аншах апла пулас çук!
Вăл çынсана хреснаçу—
Сана аçу вырăнне...
Унăнşырă тусăпулса
Хресна хĕрне йуратса,
Айăпсăра хăй хĕрне,
Сыхлас пулаӗ усалтан.
Ӑсран тухнă ват етем,
Пурнăç сӳнсе ларас шух,
Усал кăмăл вăл тытса
Сан упăшку пуласшăн!
Аншах апла пулас çук!
Хамăр пурнăç пур çинше
Усал çылăх пулас çук!“

Шур тутăр пек шуралса,
Пĕтĕм пӳпе ҫĕтресе,



Анҫах вăл ҫĕр пулăҫă
Ҫĕрле пĕҫҫеҫ пул тытса,
Шыв хĕрĕнҫе ларнă ҫух,
Илтсе йулнă вăл сасса.

Вилнĕ çын пек сивĕнсе,
Пит хăраса Марийе
Кайса ӳкнĕ урайне.
Анҫах тăна кĕрсен те
Куçне каллах хупланă,
Ним сăмах та каламан.
Ашшĕ-амăш кулҫанса,
Хĕрне ҫунтан хĕрхенсе
Савăнтарма тăрăшнă.
Ашшĕ-амăш хуйхăрни,
Ашшĕ-амăш хĕрхенни,
Хĕр ҫĕринҫи хуйăха
Кăк пек кăклас прахас çук.
Ик кун иртсе кайаҫҫен,
Хăш ҫух хуллен макăрса,
Ним çимесĕр, ĕçмесĕр,
Сулна, сулна ӳкес пек,
Çамрăк мĕскĕн Марийе
Ҫунтан-вартан кулҫанса,
Пĕр ыйхăсăр çӳренĕ.
Ик кун иртсе кайсасăн,
Унăн çутă пӳлĕмĕ,
Пушă йулнă кĕлетке пек,
Пĕҫҫен йулнă пытанса.
Кампа вăл хĕр тарнине,
Йепле хăççан тарнине,
Ыйтсан пĕлмен никам та.
Анҫах вăл çĕр пулăçă,
Çĕрле пĕҫҫен пул тытса,
Шыв хĕрĕнҫе ларнă ҫух,
Илтсе йулнă вăл сасса:

Лаша ури сассисем
Тупăртатса илтĕннĕ;
Темскер ҫинҶен касаксем
Пынă хуллен калаҫса;
Пăшăлтатса калаҫни—
Хĕр калаҫни илтĕннĕ.
Ҫаран ҫинҶе ирпеле
Сывлăм, Ҷĕр курăк тăрăх
Сакăр такан йĕррийĕ
Выртнă паллăн курăнса.
Ҫамрăк пит-куҫ мамăкĕ,
Ҫамрăк кăтра сарă ҫӳҫ,—
Ҫамрăк илем анҶах мар
Хĕрсен пуҫне ҫаврăт.
Хăш-Ҷух ват ҫын хайар ҫын,
Ҫамка ҫинҶи картланҶăк
Кăвак кăтра, ват кăтра,
Ҷуна хитрен курăнать,—
Вĕри шухăш вăратать.
Унтаҥ кайран КоҶупей
Ҷасах илтнĕ хыпара.
Пуйан, Ҷатлă КоҶупей
Ҫапла калать хуйхăрса:
„Хĕрĕм мана пăрахса:
Пур ыр йата шалт ҫĕртсе,
Пур намăса вăл манса,
Тарса кайрĕ ман патран.
Манăн тăшман, усал ҫын
Манăн хĕре ыталать!
Мăшкăл! Мĕскер тăвасах?
Кун пек усал хуйăха,

Кун пек мăшкăл хыпара
Йепле хăйса ĕненес?"

Ĕлĕк ашшĕ-амăшĕ
Марийерен тĕлнеҫҫĕҫ.
Халĕ ĕнтĕ Марийев,
Килтен тарса кайсассăн,
Мĕн пур шухăш пĕтĕмпех,
Ҫарамас пек курăнҫĕ.

Халĕ ĕнтĕ Коҫупей
Ҫамрăк хĕрĕн пурнăҫне,
Ҫамрăк хĕрĕн шухăшне,
Тĕпне-йĕрпе ăнланҫĕ:

Мĕнтен капла Марийе,
Ку таранҫҫен хуйхăрса,
Вăрттăн пĕр май куҫанса,
Пĕҫҫен хăй пуҫ тĕлĕшшĕн,
Шухăшласа ҫӳрет-ҫĕ?

Ку таранҫҫен каҫҫăсем
Ăшă сăмах каласан,
Ҫĕмсĕр мăн-кăмăлпа,
Пĕр ҫĕнмесĕр ларaĭ-ҫĕ.

Мĕншĕн капла Марийе,
Ĕҫкĕ-ҫикĕ хушшинҫе ларнă ҫух,
Ерех стакан кăпăкпа
Илемленсе тăнă ҫух,
Халап-сăмах савăнса
Ăш ҫĕререн тухнă ҫух,
Ним ҫĕнмесĕр тĕлĕнсе,
Ват кетмăна итлесе,
Савăннă пек ларaĭҫĕ?

Кетмӑн ӗлӗк ђапсӑр ђух
Йур-сӑввисем кӑларнӑ.
Мӗншӗн капла Марийе,
Ку таранђђен пӗр майах,
Кетмӑн кӑларнӑ йурсене
Ђунтан савса йурлаӑђӗ?
Мӗншӗн вӑл ку таранђђен
Утлӑ ҫарсем танасша,
Хитреленсе тӑнине,
Арҫын ђунлӑ етем пек,
Хӗр пулсан та пӗр майах
Вӑрҫӑ тавраш саваӑђӗ?
Малороссен пуҫлӑхӗ—
Ватӑ кӑвак Маҫеппӑ.
Кетмӑн пунђук[1]) умӗнђе,
Унӑн пулав[2]) умӗнђе,
Литавр[3]) ҫапса, савӑнса
Вӑрҫа ђӗннӗ сассене
Мӗншӗн капла Марийе
Ку таранђђен, хӗр пек мар,
Хыт йуратса итлеђђӗ?
Ӗнтӗ ђаплӑ Кођупей
Марийенӗн шухӑшне
Илђӗ тӗппе ӑнласа.
Пуйан, ђаплӑ Кођупей.
Унӑн пайтах ыр туссем,

[1]) **Пунђук**—кетмӑн палли (знамя).
[2]) **Пулав**—ерешлесе тунӑ туйа (жезл); пунђукпа пулав—кетмӑн хӑватне пӗлтерекен йапаласем пулнӑ.
[3]) **Литавр**—тирне карса ик ҫурмашар ђӑмрашка майлӑ тунӑ мусыккӑ каламалли йапала.

Ырă йатне нихçан та
Мăшкăл тума парас çук.

Полтав хули халăхĕ
Халех хатĕр тапранма.
Тăшман мăшкăл тунăшăн
Халăх пухса Кођупей,
Вут çисĕм пек сасăртăк,
Ват кетмăна—тăшмана,
Ним хуйăхсăр ларнă ђук,
Алла сăнă-хĕç тытса
Ђиксе пăрахма пултараĭ.
Анђах ђаплă Кођупей
Урăх шухăш шухăшлаĭ.

Вăл вăхăтра Роççийа—
Çамрăк вырăс патшалăх,
Аслă Петĕр хушнипе,
Кĕреше-кĕреше вăйланнă.

Ун ђух вырăс хăлăхне
Шветсен патши ђаплă Карл
Ђапа тухма вĕрентнĕ.
Ашшĕ-амăш ађана,
Хĕрхенмесĕр хĕнесе,
Çаппа çапса ăс параĭ.

Анђах вырăс патшалăх,
Ăслă, ăнлă ађа пек,
Пайтах ђăтса усала
Ђунтан тўссе çĕнтернĕ,
Вăл ыр ђаппа хăватланнă.

Çаппа йăвăр мулатук
Çивĕђ хурăç тунă ђух,

Пит хыт çапса хурăçа
Çĕмрет, ваклаŤ, сирпĕтет.
Уссăр ђапа тăхăнса
Карлă çŷрет хастарлă,
Çавра çил пек, пит хайар
ПыраŤ Мускав йенелле;
Вырăс çарри халăхне,
Çŷп-çап, тусан вĕçнĕ пек,
Хумханакан курăк пек
Вĕрет, шăлаŤ, хумхатаŤ.
Карлă пынă çулпалах
Кайран хрантсус патшийĕ—
Наполеон мухтанса,
Пынă Мускав хулине.
Анђах килне тарнă ђух,
Пĕтĕм ђапне çухатнă.
Пĕтĕм халăх—Украйнă
Вăрттăн, хуллен хумханаŤ.
Вут-хĕм çуна пуçлани
Çапла йăвăр султтанпа
Кĕленђене çапсассăн
Пĕрре тивсенех салатаŤ,
Çирĕп хурса çапсассăн
Çапмассерен хытараŤ.
Пайтах вăхăт пур ĕнтĕ,
Авал вăрçă вăхăтра,
Пурнăç курнă ват çынсем
Халăх вăрçа пуçласса
Ђунтан кĕтсе тăраççĕ.
Çăмăлçах пек савăнса
Швет патшине Карăла

Ӗунтан-вартан кӗтеҫҫӗ
Кетмӑн ҫинӗен пур халӑх
Ӳпкелесе калаҫать,
Йӗри-тавра Маҫеппӑ:
„Вӑхӑт ҫитрӗ, вӑрҫӑ ӗух,
Ҫыхса ан ӗар халӑха!“
Тесе пӗр май кӑшкӑрать.
Анӗах ӗейе Маҫеппӑ
Ним сӑмахсӑр, пит хайар,
Авалхи пек халӑха
Хӑй аллипе тыткалать.
Халӑх сасси шавлани
Ват кетмӑна илтӗнмест.
Нимле шухӑш ҫук пекех,
Ӗҫкӗ-ҫикӗ хушшинӗе
Ырлӑх курса пурӑнать,
Аслӑ вырӑс патшине
Пӑхӑннӑ пек курӑнать.
Ҫамрӑк, йӗкӗт аӗасем
Калаҫаҫҫӗ шавласа:
„Пирӗн кетмӑн ватӑлӗӗ,
Унӑн вут пек кӑмӑлӗ,
Мӗн пур хастар шухӑшӗ,
Вӑхӑт иртсе кайнипе
Йӑвӑр ӗҫсем айӗнӗе,
Йӑвӑр шухӑш хыт пусса,
Сӳнсе ларӗӗ курӑнать.
Ват ӗӗтрекен аллипе
Мӗншӗн вӑл ку таранӗӗен
Тытса ларать пулава?
Ӗнтӗ иртрӗ ыр вӑхӑт,—

Ҫăрҫă халăх пуҫтарса,
Аҫа-ҫиҫĕм ҫăмăр пек,
Усал Мускав хулине
Тĕппе ватса пĕтерме!
Ватă, ҭаплă, ырă ҫын—
Торошеньккă[1]) пулсассăн
Ҫамрăк, ҭаплă, хастарлă
Самойловиҭ[2]) пулсассăн,
Йе ыр Палей[3]) пулсассăн,
Корҭейенко[4]) пулсассăн—
Хăш те пулсан вĕсенҭен—
Ҫарă пуҫлăх пулсассăн,—
Пирĕн маттур касаксем
Таҫти инҫе ҫĕр-шывра—
Лихҭантийĕ[5]) ҫĕрĕнҭе,
Йур-кĕрт тăрăх ҫӳресе
Шăнса пĕтмен пулĕҭҭĕҫ;
Хуйха йулнă Украйнăн
Вăрҫă халăх ушкăнсем
Пурăнĕҭҭĕҫ ирĕкре

---

[1]) **Торошеньккă** авал. вырăс халăхĕпе хирĕҫсе, Малораҫҫейĕ Мускав алли айенҭен кăларасшăн вăрҫса пурăннă.

[2]) **Самойловиҭ**—Маҫеппăран малтанхи кетмăнăн ывăлĕ. Апшĕне Аслă Петĕр аппăшĕ (Сухвпне) шанмасăр Ҫĕпĕре хăваласа йанă.

[3]) **Палей**—ҫарă пуҫлăх пулса пурăннă. Маҫеппă елекĕ тăрăх патша ăна Ҫĕпĕре Йениҫейска хăваласа йанă.

[4]) Корҭейенко—Сапорошри касаксен аттаманĕ пулнă. Ăна патша 1708 ҫулта пуҫне кастарнă.

[5]) 20000 касак Петĕр хушнипе вăл вăхăтра Лихҭанти ҫĕрĕнҭе шветсемпе вăрҫнă.

Çамрăк халăх, çулăм пек,
Ним ђарăва пĕлмесĕр,
Ним пуласса сисмесĕр
Çапла куллен ўпкелет.
Авал Похтан Хмелнитски
Мĕн пур халăх ирĕкшĕн
Пайтах вăрçа йун тăкнă.
Усал тăшман аллинђен,
Вăрçса ђапа тухсассăн,
Хайĕн ырă ирĕкпе,
Вырăс патши аллине
Пĕтĕм халăх парăннă.
Ку вăхăтра вăл ĕçе
Çамрăк халăх астуман.
Анђах ват çын аплах мар.
Ĕç-пуç тума тытăнсан,
Вăрттăн пăхаť сыхланса,—
Мĕнле ĕçе тумалла,
Хăшне тума кирлĕ мар...
Ĕç-пуç тума шутласан,
Хыпса-ўксе тытнас çук.
Пăрпа тулнă тинĕсе,
Шăнса хытнă тинĕсе
Тĕпне анса кам курас?
Ђейе етем ђĕрине,
Усал, тĕпсĕр камăла,
Йепле етем кĕрсе курас?
Ђейе тĕпсĕр ђĕрере
Вут пек вĕри шухăшсем
Тĕпсĕр шутсăр тарăн та
Вăрттăн путса выртаççĕ.

Иртсе кайнă вăхăтра.
Ăша килнĕ шухăшсем,
Етем курман вырăнта,
Çырла пиçсе çитнĕ пек,
Пиçсе, пулса çитеççĕ.
Çын шухăшне кам пĕлес?
Ђĕри ђейе пулсан та,
Сăнран пăхма Маçеппă.
Сыхлавмасăр пек çӳрет.
Çынпа мĕнпе калаçаť—
Мăн кăмăллă çын пек мар.
Ватă кетмăн пит ђейе,
Ватă кетмăн пит ăслă:
Çынсен ăсне витĕрех,
Таса куçпа курнă пек,
Тĕппе-йĕрпе вăл кураť.
Çын шухăшне Маçеппă,
Хăй кăмăлне килнĕ пек
Шиňленмесĕр тытаť.
Усал, ђейе ђĕрипе,
Ёçкĕ-çикĕ хушшинђе,
Ват çынсемпе ларнă ђух,
Иртсе кайнă ирĕке
Хĕрхенсе пек, калаçаť.
Хăй ирĕкне савакан
Етемпеле тĕл пулсан,—
Мухтаť ирĕк пурнăçа.
Ђаплă, аслă çынсене
Ђунтан йатлаť хурласа.
Ăвшăрт çынпа тĕл пулсан,—
Пĕрле куç-çуљ йухтараť.

Ухмах, айван çынпала
Ăслă халап калаçаť!
Кетмăн хватлă шухăшне
Сайра хутра пĕр виç çын
Пĕлсе, курса тăраççĕ.
Хайар, ђейе Маçеппă
Хăй курайман çынсене
Сийен тăваť савăнса;
Ку таранђђен Маçеппă
Кӳрентерсе хурлакан—
Мăшкăл тăван тăшмана
Ахаљ манса хăварман,—
Хирĕç панă тавăрса.
Усал тăвас тесессĕн,
Инçе тесе ђарăнса,
Йăвăр тесе тытăнса,
Вăл тумасăр хăварман.
Уншăн таса йапала,
Ку таранђђен пурнăçра,
Çут тĕнђене çуралман.
Вăл ниме те йуратмасť;
Шыв вырăнне шутласа
Етем йунне йухтараť.
Пур халăхăн ирĕкне
Курăймасăр пурăнаť.
Хăй çуралнă çĕр шыва
Çук вырăнне хисеплет.
Вăрттăн, ђейе ђĕринђе
Нумайранпа усал çын
Усал, тискер шухăша—
Кунĕн-çĕрĕн ађашлаť.

Анђах ватӑ Кођупей—
Кетмӑн хӑруш тӑшманӗ—
Хайӗн ӑслӑ куҫӗпе
Кетмӑн усал шухӑшне
Пӑхса курнӑ витӗрех,

Ҫук, тискер, ват тӑшман!
Ҫуртна санне тивес ҫук,—
Ҫуртӑ хӗрӗм ђӗрийӗ.
Ҫулӑм-кӑвар хӗрӳпе
Ес кӗл пулса кайас ҫук;
Сана хӗҫ те тивес ҫук;—
Сана усал тӑшмана—
Мускав палађ [1]) аллисем
Хӗн кӑтартса вӗлерӗҫ.

Усал ҫӗлен вут ҫинђе,
Авкаланса выртнӑ пек,
Авкалана пуҫласан,
Авкаланса хӗн курса,
Ђӑтаймасӑр асапа,
Аса илен пурнӑҫна.

Марийене ман хӗре
Тӗне кӳртнӗ сехете
Аса илӗн ылханса,—
Вӑл кун сана йуратса,
Марийешӗн савӑнса,
Ерех тулли куркапа
Сана савса ӗҫтертӗм.

---

1) **Палађ**—етем пуҫне касакан, ҫынна хӗн кӑтартса вӗлерекен.

Есĕ, усал çăхан пек,
Квакарҫăн пек хĕрĕме
Тытса пуçне хышларăн!"
Çапла ватӑ Коҫупей,
Шăлне çыртса çиленсе,
Тăшман çинҫен шухăшлаӑ.
Ёлĕк иртнĕ кунсенҫе,
Коҫупейпа Маçеппă
Туслă пулса пурăннă.
Çăкăр-тăвар валеçсе,
Ёçкĕ-çикĕ савăнса
Пĕрле ĕçсе пурăннă,
Пĕр шухăшпа пурăннă.
Вăрçă тавраш тапрансан,
Тăшмансене çĕнтерсен,
Утсем çине утланса,
Вут-хем, çулăм хушшинҫе,
Хирте пĕрле ҫуптарнă.
Иккĕш пĕрле пурăнса
Нумай пĕрле калаçнă,
Пайтах вăрттăн шутланă.
Вăрттăн ҫунлă Маçеппă
Хăш ҫух ҫейе ҫĕрине
Кĕтессинҫен кăшт утса,
Тискер, выçлăх кăмăлне,
Тĕпсĕр, вĕçсĕр шухăшне,
Çавра çил пек вăркакан,
Аш-ҫиккине, вăл шанса,
Коҫупейе кăтартнă.
Хура халăх тапранса,
Тинĕс хум пек хумханса,

Пĕтĕм саман улăшасса
Хăшĕ ҫух кăштах систернĕ.

Вăл вăхăтра Коҫупей,
Пĕтĕм ҫунтан савăнса,
Ватă кетмăна пăхăннă.
Халь Коҫупей апла мар:
Кунĕн-ҫĕрĕн пĕр шухăш,—
Усал тискер шухăша,
Аҫа пеке ахаплать.

Мăшкăл курнă хĕрĕшĕн
Хĕрхенес ҫук хăй пуҫне
Хăй курайман тăшмана
Хирĕҫ тавăрас шухăшлать.

Анҫах тискер шухăша,
Шанҫăк туса тупмасăр,
Хăйĕн вăрттăн ҫĕрине
Хупса лартнă питĕрсе.

Халĕ ĕнтĕ Коҫупей,
Пĕтĕм ҫунтам хурланса,
Тупăк ҫинҫен шухăшлать,
Маҫеппăна вăл ĕнтĕ
Усал сунса хурламасть:
Маҫеппă мар айăплă.
Мĕн пур айăп хĕрĕнҫе.

Ҫук, ĕнтĕ вăл хĕрне те
Пур айăпне каҫарать:

„Мĕн пур усал мăшкăмлшăн,
Тăвансене пăрахнăшăн,
Тур умĕнҫе Марийе,
Хисеп парĕ тавăрса“.

Çапла шутлаҭ пулсан та
Килти йышсем хушшинђе,
Ăмăрт кайăк пăхнă пек,
Шанђăк йулташ хăй валли,
Виттĕр пăхса вăл шыраҭ.
Хăй шухăшне Маçеппă
Шанђăк туса—арăмне
Вăрттăн уçса кăтартнă.
Ĕнтĕ пайтах вăхăт пур,
Тăшман çинђен Кођупей
Патша патне Мускава
Хайар хыпар хатĕрлет.
Ђăтма пĕлмен ђĕрипе,
Хĕр-арăмпа çиленсе,
Арăм мар май васкатаҭ:
Çĕрле сассăр вăхăтра,
Вырăн çинђе выртнă ђух,
Ыйăх çывăра пĕлмесĕр,
Темле усал сывлăш пек,
Пăшăлтатса калаçаҭ,
Упăшкине ÿпкелет,
Куç-çулђ тăкса макăраҭ,
Тупăштарса калаçаҭ,
Кађупейе ÿкĕтлет.
Тĕксĕм, ватă Кођупей
Ĕнентерсе тупăшаҭ.
Тăшман пуçĕ тĕлĕнђе
Тушкан [1]) тăраҭ çакăнса

[1]) Тушкан—ђукмар.

Искрă [1]) йатлă çар пуçлăх
Коҫупейпе пĕр шухăш,
Унăн хăрас шухăш çук,
Тăшман персе ÿкессе—
Иккĕн пĕрле шутлаççĕ.
Тăшман пуçĕ пĕтессе—
Паллах тăраĭ курăнса.
Анҫах шанҫăк, ыр çынна
Ăçтан тупаĭ шыраса?
Кетмăн синҫен хыпара
Хăйса патша аллине
Йепле етем ăсатас?
Хыпар пама пит хăруш:
Петĕр патша тăшмана
Пурнаĭ ҫунтан ĕненсе.
Çÿлте çутă çăлтăрсем
Йăлтăртатса пăхаççĕ.
Уйăх çутти çап-çутă.
Ку кам кайаĭ йуланпа,
Капла шăн-çĕр вăхăтра?
Ку кам лаши хир тăрăх,
Аслă, вĕççĕр хир тăрăх?
Ҫупаĭ ывна пĕлмесĕр?
Çур-çĕр йенне васкаса
Çапла касак ҫуптараĭ.
Ывна пĕлмен етем пек,
Ни таса хир варринҫе,

---

[1]) Искрă—вăл вăхăтра Полтавă хулинҫе çар пуçлăх пулса тăнă.

Йӗшӗл вӑрман ҫумӗнҫе,
Шывсем урлӑ каҫнӑ ҫух



Виклӗ-шиклӗ шухӑшпа,
Ҫарса канас шухӑш ҫук.

Унӑн виҫкӗн хурӑҫӗ
Ҫут тӗкӗр пек йӑлкӑшаҫ,
Хӗве ҫикнӗ хутаҫӗ
Ҫӑнкӑртатса илтӗнет.
Хӗм пек лаши такӑнас ҫук,
Вӗлкӗштерсе ҫилхине,
Ҫавра ҫил пек вӗҫтерет.

Йӑлкӑшакан ылттӑнсем
Тыткалама кирлӗ пуҫ.
Виҫкӗн хурӑҫ касака—
Вӑйӑ савнӑҫ вырӑнне.

Вут пек лаши хурӑҫран—
Хаклӑ хака тӑрас ҫук.
Пуҫри ҫӗлӗк касака—
Пуҫран кайа тӑрас ҫук.

Мӗншӗн капла касака
Пуҫри ҫӗлӗк пит паха?
Усал Маҫеппӑ ҫинҫен
Хатӗрленӗ хыпара
Ҫӗлӗк ӑшне ҫӗленӗ.

Вӑл хыпара сыхласа
Маттур касак васкаса,
Петӗр патша аллине
Коҫупейрен ӑсатаҫ

Ҫав вӑхӑтра Маҫеппӑ
Ҫил-хусӑрка пуласса
Ним пӗлмесӗр, сисмесӗр
Ѣлӗкхи пек пӗр майах,
Хӑй шухӑшне шухӑшлаҫ.

Ийесуит [1]) Саленский
Унпа пĕрле щухăшлаҫ;
Пур Украйнă халăхне
Пăтрантарма пулăшаҫ;
Тĕрексĕр патша вырăнĕ
Кетмăн валли хатĕрлет.
Халăх Петĕре прахсан,
Патша пуçне сутасса
Хака хурса шутлаççĕ.
Тĕттĕм çĕрле хурах пек
Иккĕш вăрттăн пуплеççĕ.
Орлик йатлă çыруç пуç—
Ват кетманăн шанђăк тус—
Таçти, никам пĕлме çук,
Çĕтĕк çурăк кĕлмĕçĕ [2])
Калле-малле ăсатаҫ,
Кетмăн патне илсе çӳрет.
Кетмăн тĕрĕс ђурисем,
Вăл хушнине итлесе,
Пĕтĕм халăх хушшинђе,
Усал емел сапнă пек,
Хĕтĕртеççĕ халăха;
Пулавинпа [3]) касаксем
Тон хĕрĕнђи касаксем,

---

[1]) Ийесуитсем тесе католиксен манахĕсене каланă. Ийесуит Саленский Маçеппă патне вырăс патша тăшмансем патĕнђен хыпарсем иле-иле çӳренĕ.

[2]) Вырăнтан тухса кайнă полхарсен пуп-пуçлăх (елхерӳ) кĕлмĕç пек тумланса Пољшă çĕрпе Украйна калле-малле хыпарсем илсе çӳренĕ.

[3]) Пулавин –Тон шывĕ хĕрĕнђи касак ытти касаксемпе вăл вăхăтра Петĕр патшана хирĕç вăрçа пуçланă.

Мускав патшине хирĕç
Пăлханмашкăн пуçланă.
Тискер тутар халăхне
Петĕре хирĕç тратнă.

Сапорошри касаксем
Авалтанпа ирĕкрэ
Ырă курса пурăннă.
Хаљ хастарлă касаксем
Маçэппăран илтеççĕ;
Патша вĕсен ирĕкне
Туртса илес тенине.

Ђейе кетмăн пур йенне
Вутлă, хĕмлĕ куçĕпе
Йалкăштарса хыт пăхаť;
Пур çĕрелле çырусем
Кунĕн çĕрĕн сапалаť.
Пур халăха хăратаť.

Пахђисарай [1]) тутарсем
Мускава хирĕç тăраççĕ.
Пољак халăх кĕрĕлĕ,
Пурнаť Варшав хулинђе,
Итлет хайар кетмăна;
Ођаковри [2]) паша, [3])
Шветсен патши Карăл та,
Пурте унтан тĕлĕнсе,
Пурте ăна итлеççĕ.

---

[1]) Пахђисарай—Крымри тутар патшисем пурăннă хула.
[2]) Ођаков—турккăсен крепĕçĕ.
[3]) Паша—турккăсен çар пуçлăхĕ (йăнрал).

Унӑн ҫейе, усал ҫунӗ
Ҫывӑрмасӑр шухӑшлаҫ;
Путса ларнӑ шухӑша
Вӑл шухӑшпа вӑратаҫ.

„Тӗрӗс алла хӗҫ тытса,
Пӗрре[illegible]касак ӗҫ тӑвас,
Авалтанхи ӗмӗте
Туса лартам хаҫ“, тесе
Ывӑнмасӑр шухӑшлаҫ.

Анҫах хайар хыпара—
Коҫупейӗн хыпарне,
Мускав патши умӗнҫи
Аслӑ, ҫаплӑ улпутсем [1])
Ҫейе кетмӑн аллине
Калла тытса таварнӑ.

Хӑш-ҫух кӗтмен вӑхӑтра
Аҫа-ҫиҫӗм сасартӑк,
Пӗлӗте ҫурса сасартӑк,
Шартах сиксе ҫын ҫӗтрет,

Ҫапла ҫейе Маҫеппӑ,
Кӗтмен ҫӗртен хыпара
Хӑй аллине илсессӗн,
Шартах сиксе ҫӗтренӗ...

Вырӑс патши улпуҫсем
Маҫепӑна йатлас ҫух,
Ӑна ҫунтан хӗрхенсе,
Аҫашласа йуратнӑ.

---

[1]) Шахвиров тата Коловкин вырӑс улпуҫӗсем, Маҫепӑ тусӗсем; вӗсем Маҫепӑна пулӑшса тӑнӑ.

Патша тĕрĕс хыпара
Суйа тесе ĕненмен.



Лайăх пĕлме тĕпçесе
Патшан вăхăт çитеймен:

Вăл вăхăтра Карăлпа
Хатĕрленнĕ ҫапăҫма.
Суйа-суйса ҫырнăшăн,
Коҙупейе ăс пама,
Унăн усал кăмăлне
Ҫемĕҫтерме каланă.
Аслă патша куҙанса,
Усал, елек хыпара
Йуратмасăр йĕрĕнсе
Хурлăх курнă кегмăна,
Иутăна савнă пек,
Ҙунтан савса хĕрхенет!
Ҙейе ҙунлă Маçеппă;
Ним айăпсăр вырăнсăр
Хурлăх курнă етем пек,
Ҙунтан патша ирĕкне
Хисеплекен етем пек,
Ҫапла калаť патшана:
„Сана, аслă патшана,
Ку таранҙен—ҫирĕм ҫул,
Пĕтĕм; тĕрĕс кăмăлпа
Епĕ пурăнтăм пăхăнса.
Ман кăмăла турă та,
Пĕтĕм тĕнҙе халăх та
Пĕлсе пурнаť пĕтĕмпе.
Ку таранҙен ес шанса,
Мана ырлăх тунине
Хисеплесе тухас ҫук...
Кураймасăр ыр ҫынна
Тăшман тăвас тесессĕн,
Усал етем,—суккăр пек!...

Вилес вăхăт инçе мар,
Ăçтан апла шутлăп-ши?
Мĕн ырлăхшăн кам ђапа
Варалăп-ши еп капла?
Мĕн ырлăхшăн савăнса
Сана хирĕç тăрăп-ши?
Аслă патша! асту-ха —
Епĕ тунă ĕçсене!
Ку таранђен савăнса,
Саншăн тунă ĕçсене
Ĕнтĕ есĕ мантăн-им?
Полђак король — Станислав —
Манран пулăшу ыйтсассăн,
Ђунтан-вартан çиленсе
Ăна пулăшу памарăм.
„Украйнăра патша пул,
Патша çĕлĕк тăхăнса,
Пуçна илем кӳр“, тесен,
Тăхăнмарăм вăтанса.
Сана ђунтан пăхăнса,
Вăрттăн çырнă хутсене,
Хам аллăма илсенех,
Ăсататтăм сан патна.
Крымри ханпала[1]) султан[2])
Сана хирĕç хĕтĕртсен,
Илтмен çын пек пулаттăм.
Ку таранђђен пурăнса

---

[1]) Хан тесе тутар патшисене каланă.

[2]) Султан тесе турккă патшисене калаççĕ.

Сан тăшмансене курсан,
Çапăçмасăр хăварман,
Хальђен пуçа хĕрхенмен:
Хăш-ђух хĕçпе çапăçан.
Хăш-ђух ăспа çапăçан.
Халĕ мана—ват çынна,
Усал тăшман мăшкăлать!
Искрăпала Кођупей—
Авалтанхи тусăмсем"!..
Тискер, ђейе Маçеппă,
Йун ĕçекен кайăк пек,
Шăнса хытнă ђĕрипе,
Тăшман пуçне кастарма,
Ирĕк ыйтать патшаран.
Усал, тискер Маçеппă!
Ес кам пуçне кастаран?
Санăн ват, сив ăшăнта
Ђул-пек хытнă ват ђĕрў!
Кунĕн-çĕрĕн кам хĕрне
Ку таранђен ыталан?
Ђун ўпкелес кăмăла.
Ђунтан сивĕ шухăшпа
Кетмăн пĕр май çывăртать:
„Мĕншĕн капла Кођупей,
Ухмах, ăссăр етем пек,
Ман хăватпа тавлашать?
Ăçтан мана çĕнтерес?
Ăçтан манпа тавлашас?
Мăн кăмăллă шухăшра,
Хăйне вэлли васкасэ,
Виђкĕн пуртă хатĕрлет.

Мĕншĕн хăйрай ку пурта.
Хĕрхенмесĕр касăлма?
    Мĕншĕн капла çырмана
Куçне хупса сикет ку?
Шанђăк ĕмĕт çта ши кун?
Йе хĕр çвне... пулас çук!
Хĕрне савса ашшĕне
Тем парсан та çăлас çук:
Уншăн хам йун йухмалла.
    Хĕршĕн епĕ кетмăн мар,—
Хĕршĕн епĕ варлă тус.
Варлă тусран тĕнђере
Хаклă етем пулас çук“!
Çапла кетмăн шухăшлай.
    Мĕскĕн, мĕскĕн Марийе!
Ђеркас[1]) хĕрсен илемĕ!
Усал, тискер çĕлене,
Шур кăкăру çинђе тытса,
Ђунтан савса ађашлан
    Ăна есĕ пĕлместĕн!
Усал, пăсăк çын патне,
Капла тискер ђун патне
Мĕншĕн ђунтан туртăнан?
    Мĕнле пĕлмен вăй-хăват
Туртса илђĕ ирĕкна?
Кама капла, Марийе!
Унăн кăвак кăтри-е.
Тарăн картлă пит-куçне,

---

1) Ђеркассем—Малораççейри касаксем.

Тарӑн ҫӑл пек тарӑнта.
Путса ларнӑ ват куҫа,
  Йӑлкӑшакан ват куҫа,
Унӑн ҫейе халапне,
Савнӑ аннӳне манса,
Хаклӑ хака шутларӑн!
  Ултав сарнӑ ырӑна
Ҫаплӑ аҫу килӗнҫен
Мала хурса йуратрӑн!
Ват ҫын хӑйӗн куҫӗпе,
Ват илемлӗ куҫӗпе,
Сана илнӗ тыткӑна.
  Хуллен саспа калаҫса
Сан шухӑшна, кӑмӑлна
Ҫывратнӑ вӑл лӑпкаса.
Ӑна савса, хӑраса,
Суккӑр куҫпа пӑхнӑ пек,
Куҫна ҫӗклен ун ҫине.
  Ҫунтан-вартан савӑнса
Пӗр май ӑна аҫашлан,—
Ху мӑшкӑлна ху саван,
Унпа пӗрле киненсе,
Манса мӗн пур намӑса,
Таса хӗр пек, ху ҫивҫен,
Мӑн-кӑмӑллӑ шухӑшлан.
  Ҫеҫен, хӳхӗм намӑса—
Хӗр вӑтанас шухӑша—
Хупа ӳксе ҫухатрӑн.
  Марийешӗн хӗр намӑс,
Марийешӗн ҫын халап—
Халӑх сӑмах ним те мар!

Măн кăмăллă Маçеппă
Ун ҫĕркуççисем çумне
Пуçне ҫиксе пăҫăрнаť.

Унҫа пĕрле ват кетмăн
Хăйĕн мĕн пур шухăшне,
Хайар, йăвăр шухăшне,
Мĕн пур пулас ĕçсене,
Пӱр шавлакан сассене
Манса кайаť ҫунĕпе,
Манса кайаť ҫĕрипе...

Măн кăмăллă Маçеппă
Хравçах хĕрпе калаçаť,
Ҫунне уçса калаçаť!
Камран ҫеҫен Марийен
Вăтанасси пулас пур?

Иртсе кайнă кунсене
Ним айăпсăр кунсене
Хĕрхенес çук Марийе.

Хăш-ҫух хура пĕлĕт пек,
Хуйăх шухăш-пĕр шухăш—
Унан ҫунне хупăрлаť:
„Атте-анне хуйхăрса,
Маншăн пер май кулҫанса,
Тунсăхласа[1]) пурнаť пулĕ“!

Çапла хăш ҫух Марийе
Хăй ăшĕнҫе шухăшлаť.

---

[1]) Тунсăх—кама та пулсан курас килсе хуйхăрни (тоска).

Ашшĕ-амăш, тăлăх пек,
Пĕр аҫасăр пурăнса,
Ӳпкелесе куллен-кун,
Ватă пуҫпа ҫӳрени—
Куҫ-ҫулӗ витĕр хăш-хăш ҫух
Курăннă пек туйăнать.

Ай, мĕскĕн Марийе!
Ним пĕлмесĕр пурăнан.
Пĕтĕм хаяăх пĕлекен,
Усал, тискер ҫак ĕҫе
Есĕ пĕлес пулсассăн!..

Хăруш, тискер вилĕм пек,
Усал, тискер шухăша
Санран ҫейе Маҫеппă
Каламасăр пытарнă.



# Полтавӑ.

## Иккӗмӗш йурӑ.

Тискер, тӗксем шухӑшпа
Ват Маҫеппӑ шухӑшлаҭ.
Ҫамрӑк, мӗскӗн Марийе
Хитре, ҭеҭен куҫӗпе
Ват ҫын ҫине йуратса,
Аҭашласа ыр пӑхаҭ.

Ват Маҫеппӑ умӗнҭе—
Ҭунтан савнӑ етеме
Ҭӗркуҫҫинҭен ыталаҭ,
Ҭунтан савса йуратаҭ,
Ҭӗре савнӑ шухӑша
Ҭарӑнмасӑр калаҫаҭ.



Савса хитре пӑхакан
Аҭашлакан ыр куҫа
Астумасӑр вӑл лараҭ.

Вăл йуратса калаҫни
Тискер, тĕксем Маҫеппă
Кăлăх сăмах вырăнне.—
Кетмăн хура шухăшне
Хĕр йуратни тартас ҫук.
Мĕскĕн Марийе умĕнҙе
Ун сăмахне илтмесĕр,
Усал сивĕ шухăшпа
Куҫне хупса шухăшлаҭ;
Савса хитре пăхакан
Аҙашлакан ыр куҫа
Астумасăр вăл лараҭ.
Аҙашласа кетмăна
Ӳпкеленĕ сăмаха.
Илтмен пекех пулса лараҭ.
Хĕр хурланса, тĕлĕнсе
Аран-аран сывласа,
Ҙунтан-вартан ҫиленсе
Ҫапла калаҭ кетмăна.
„Кетмăн, итле ес мана,—
Епĕ саншăн тĕнҙере
Мантăн мĕн пур-ырлăха;
Пĕрре сана йуратса—
Ĕмĕрлĕхе йуратса,
Пĕр ырлăха кĕмерĕм,—
Ĕмĕтлентĕм сан ҫине—
Ес савасса ĕнентĕм;
Мана йуратăн тесе
Пур телейе пĕтертĕм.
Анҙах темле пулсан та
Ĕнтĕ тин еп ӳкĕнес ҫук,

Иртсе кайнă ырлăха
Хĕрхенместĕп макăрса.
Астăватни вăл çĕре—
Вăл çĕр сана парăнтăм...
Ĕнентерсе ес вăл çĕр,—
Ăнтăхса хыт тупăшрăн,
Мана ҫунтăн савăнса,
Ĕмĕр мана йуратăн
Аҫашласа пурăнăн
Тесе мана каларăн.
Мĕншĕн халĕ ес ĕнтĕ
Прахан мана йуратма"?

**Маçеппă:**

Тусăм есĕ тĕрĕс мар!
Пăрах ăссăр шухăша.
Есĕ мана шанмасăр
Пур ҫĕрӳне пĕтерен;
Вут пек ҫунна вырăнсăр
Хĕм пек вĕри шухăшна
Хĕрхенмесĕр хумхатан.
Ĕнен мана, Марийе!
Сана ҫунтан савăнса
Нимрен ытла йуратан.
Мана ним те кирлĕ мар:
Ни ҫаплă йат кирлĕ мар,
Ни вăй-ирĕк кирлĕ мар.

**Марийе:**

Ĕненместĕп еп сана:
Есĕ ҫейе калаçан.
Асту, нумай пулаť-и,—
Уйăрлмасăр иксĕмĕр?

Пурнаттӑмӑр йуратни
Епӗ савса йуратни
Аҫ̌ашласа йуратни
Сана урӑх кирлӗ мар;
Йентӗ манран йӑлӑхса
Манран таран пӑрахса.
Куллен есӗ калаҫан
Старшинасем хушшинҫ̌е;
Лаша кӳлсе ҫ̌уптаран;
Йӗҫкӗ-ҫикӗ хушшинҫ̌е
Куллен куна ирттерен;
Мана манса хӑваран;
Вӑрӑм ҫӗрсем иртеҫ̌ҫ̌ен
Пӗҫ̌ҫ̌ен пуҫпа пурӑнан;
Хӑш-ҫ̌ух ҫӗтӗк кӗлмӗҫпе
Мана манса калаҫан;
Йе йесуит патӗнҫ̌е
Ҫӗр каҫаҫ̌ҫ̌ен ес ларан,
Манӑн тӳлек кӑмӑла
Йуратмасӑр йышӑнан.
Нумай пулмасӗ,—астӑвап—
Туҫ̌ски[1]) кнҫ̌аҫӑн арӑмне
Сывлӑх сунса ес ӗҫрӗн;
Ҫ̌ӑнах ку ӗҫ-ҫӗн хыпар,
Есӗ мана кала-ха—
Кам-ха санӑн вӑл арӑм?

---

[1]) Туҫ̌ски кнҫ̌аҫӑя арӑмӗ ийесуит Саленски тата хай ҫӗтӗк кӗллӗр пек ҫӳрекен вырӑнсӑр елхери Маҫеппӑн тусӑсем пулнӑ, вӗсем Маҫеппа патне ытти патшасем патӗнҫ̌ен, хыпарсем парса тӑнӑ.

**Маçеппă:**

Есĕ мана кӳлешĕн?
Ĕнтĕ тин ват пуçăмпа
Ун пек çамрăк шухăша
Йепле хăйса шухăшлăп?

Хитре, ҫеҫен хĕр-арăм,
Мăн кăмаллă хĕр-арăм,
Ăçтан мана йуратас?

Ĕççĕр çамрăк аҫа пек,
Кун пек вată кăмăлпа,
Çын арăмне астарса
Ăçтан усал шухăшлăп?

**Марийе:**

Çук, ес кала ҫун уçса,
Калла-малла ан калаç,
Тӳррех кала сăмаха.

**Маçеппă:**

Нимрен ытла еп сана
Ку тĕнҫере йуратап,
Нимрен ытла ес паха!
Ҫĕрӳн тӳлек пурнăçне
Палхатмăттăм нимпе те.

Пĕлес килет пулсассăн,
Итле еппин, Марийе!
Нумай ĕнтĕ вăхăт пур
Пысăк ĕçе тытăнни.

Вĕри шыв пек тулхăрса,
Вăл ĕç вĕрет халь ĕнтĕ.
Ырă сехет çывхарать,—
Çапçас вăхат инçе мар...

Ку таранҫен Украйнӑ,
Ҫӗре савнӑ ирӗксӗр,
Варшав алли айӗнҫе,
Мускав ирӗк хушнӑ пек
Пуҫне ҫиксе пурӑнҫӗ.
Халӗ ӗнтӗ Украйнӑн
Хӑй ирӗкпе пурӑнма
Вӑхӑт ҫитрӗ ҫавӑрнса—
Ҫӗре савнӑ ирӗкшӗн,
Петӗре хирӗҫ тапранса
Йунлӑ йалав савӑнса
Хам аллӑмпа ҫӗклетӗп.
Пурте хатӗр тапранма:
Полҫак королӗ, швет королӗ
Манпа пӗрле пӗр канаш;
Тен ҫас епӗ малашне,
Халӑх варҫнӑ хушӑра
Патша вырӑнӗ хам валли
Туса лартӑп савӑнма.
Манӑн шанҫӑк тусӑмсем:
Тулськи кнҙаҫӑн арӑмӗ,
Ийесуит Саленски,
Ҫӗтӗк-ҫурӑк хай кӗлмӗҫ
Ман шухӑша тӑваҫҫӗ,—
Вӗсем урлӑ ҫырусем
Вӑрттӑн мана килеҫҫӗ.
сан валли хыпарсем
Сана шанса каларӑм.
Сана ӗнтӗ ҫитет-и?
Мана шанман шухӑшсем
Кайрӗҫ-и хаљ сирӗлсе?

М а р и й е:

Ӡунӑм савнӑ ырӑ тус!
Хам ҫуралнӑ ҫӗр-шывра
Есӗ патша пулатӑн!
Савӑн кӑвак пуҫ ҫинҙе,
Кӑвак кӑтра ҫӳҫ ҫинҙе,
Патша ҫӗлӗк илемӗ
Килӗшмелле тем пекех!

М а ҫ е п п ӑ:

Тӑхта, тусӑм, ан калаҫ:
Пӗтӗм хатӗр ҫитмен хаљ;
Аҫа-ҫиҫӗм пуҫланӗ...
Мана мӗскер пуласса
Хаљ кам пӗлес малтанах?

М а р и й е:

Санпа пӗрле ларнӑ ӡух
Манӑн хӑрас шухӑш ҫук;
Мӗнрен хӑрас—кала-ха?
Ес пит вӑйлӑ, пит хватлӑ!
Санӑн хвату ҫав тери...
Ай, пӗлеп сана, савнӑ тус!
Сана ыр ӡап малашне...
Патша вырӑнӗ курнаӗ,
Сана кӗтсе вӑл тӑраӗ!

М а ҫ е п п ӑ.

Пуртӑ кӗтет пулсассӑн?

М а р и й е:

Апла пулас пулсассӑн,
Санпа пӗрле савӑнса
Пуҫа хурап пурт айне.
Ах, ӡунтан-вартан савн тус!

Сансăр пуçне тăр пĕҫҫен
Ăçтан манăн пурăнас?
Çук, çук, апла пулас çук:
Патша пулас ыр паллă
Сан куçăнта курăнать.

**М а ç е п п ă:**

Йурататăн-и ес мана?

**М а р и й е:**

Епĕ-и! йурататăп-и?

**М а ç ĕ п п ă:**

Есĕ мана кала-ха!
Хаҫ кам сана пит паха?
Упăшку-и? аçу-и?
Хăшĕ саншăн хаклăрах?

**М а р и й е:**

Ҫунăм савнă, ыр тусăм!
Мĕнтĕн капла ес ыйтан?
Капла ыйтса ҫĕрене
Уссăр ватса хускатан.
Хамăн тăван кил-йыша
Манса кайма тăрăшап.
Атте-анне тен мана...
(Ах, пит хăруш кун шухăш!
Атте хаҫҫен тен мана
Ылханҫĕ пуҫ кӳренсе?

**М а ç е п п ă:**

Еппин епĕ аçунтан
Хаклăрах-им кала-ха?
Каламастăн-и?..

**М а р и й е:**

Ах, турă!

а ç е п п ă:

Ну кала! Каламастăн-и?

**М а р и й е:**

Хăвах ђухла шутласа.

**М а ç е п п ă:**

Итле мана, Марийе!

Пăхах есĕ шутласа:

Сан аçупа иксĕмĕр

Хăш те пулсан, пурă пĕр,

Пуç пĕтмелле пулсассăн,

Есĕ тӳре пулсассăн

Иксĕмĕртен пĕрине—

Аçуна-и, мана-и—

Хăшен пуçне кастарăн?

Хăшне çăлса хăварăн?

**М а р и й е:**

Ах, ах.. çитĕ ман ђуна

Ку таранђен пăтратма

Есĕ усал сывлăш пек...

**М а ç е п п ă:**

Кала!

**М а р и й е:**

Санăн сăну кĕл пекех,

Сан халаппу пит хайар...

Ай, ан çилен ман çине!

Санран паха кам пулас...

Ку тĕнђере пулас çук...

Ĕнен мана савнă тус!

Пур ырлăха парне пек

Сана пама хатĕр еп.

Ку халапсем пит хăруш,

Ман ђĕрене пит тискер.
Ҫитĕ ĕнтĕ калаҫма.

**Маҫеппă:**

Асту ĕнтĕ, Марийе!
Халђ калана сăмаха.

Украйнă ҫĕр пит тӳлек.
Ҫут ҫанталăк йавкăрах.
Ҫӳлте ҫăлтăр ушкăнĕсем
Йăлтăртатса пăхаҫҫĕ.
Уҫă сывлăш тĕлерет,
Ыйха ҫĕнсе тăраймасť.
Тирек йăвăҫ ҫулҫисем
Кĕмĕл майлă ҫуталса
Хуллен-хуллен ђĕтресе
Шăкăртатса лараҫҫĕ.
Тулли уйăх пĕлĕт ҫинђен
Ним шухăшсăр йăлкăшаť,
Шур-Ђиркĕве ҫутатаť.
Кетмăн хӳхĕм пахђисем,
Йешĕл йывăҫ пахђисем,
Авалтанхи ђул ҫуртсем
Тулли уйăх ҫуттипе
Тĕлĕнмелле ҫуталса
Ҫывăрнă пек лараҫҫĕ.
Йĕри-тавра пур ҫĕрте
Майсăр тӳлек, ним сас ҫук.
Тимĕрленĕ Кођупей
Кетмăн тĕрми пашнинђе¹)

¹) Ҫӳллĕлетсе тунă ҫурта пашне, теҫҫĕ.

Ларат̆ йăвăр шухăшпа.
Пĕђђен пуҫпа хуйхăрса,
Хура шухăш шутласа



Ђӳређерен пĕлĕт ҫине
Пăхса ларат̆ эпăршша.

Ыранхи кун ун пуçне
Виђкĕн пуртă касмалла.
Анђах ђаплă Кођупей
Пуçа пуртă касасса
Хуйхăрмасăр шухăшлаť,
Вăл пурнăçа хĕрхенмест:
Вилĕм уншăн—ыр ыйăх.
Ĕнтĕ йунлă тупăка
Халех выртма вăл хатĕр.
Ыйăх килсе тĕлĕрет..
„Ах, ах, туррăм, тĕрĕс пул
Йепле сассăр йапала
Ним ђĕнмесĕр ўкнĕ пек
Тăшман урисем умне
Пĕр сăмахсăр ўкесех?
Мĕншĕн капла ку патша
Хăйĕн тăшман аллинех
Мăшкăл тума ман пуçа
Ирĕк пађĕ тăшмана?
Пурнăç сўнет ним уссăр,
Ыр йат пĕтет вырăнсăр.
Хампа пĕрле туссене
Пуртă айне тăратса
Тискер тупăк умĕнђе
Уссăр ылхан илтетĕп
Пуртă айне айăпсăр,
Пуçа ђиксе выртнă ђух,
Тăшман куçпе тĕл пулса
Вăл савăнса пăхнине
Йулашки хут тĕнђере
Ђун тарăхса курмалла".

Тискер вилĕм вăхăтсăр
Ыталаса илнĕ ђух,
Тăшман ҫынна тавăрма,
Тăлăх турат-етем пек,
Никама та хушмасăр,
Ҫапла, халаллаймасăр;
Ку тĕнђерен кайатăп"!

Халĕ ĕнтĕ Кођупей
Аса илђĕ Полтава;
Хăй ҫуралнă ҫĕр-шыва,
Тăван кил-йыш ушкăнне,
Ђунтан савнă туссене.
Иртсе кайнă ырлăха,
Пуйанлăхпа, пур ђапа.
Савнă хĕрĕн—Марийен
Пур илемлĕ йуррине,
Хăй ҫуралнă кил ҫурта;
Вăл кил ҫуртри ĕҫсене,—
Канлĕ, тутлă ыйăха,
Пурнăҫ иртсе кайађђен
Нумай курнă ырлăха.

Халђ пурне те, пурне те
Аса илсе Кођупей,
Пĕђђен пуҫăн хурланать:
„Мĕн пур пурнăҫ ырлăхне
Хам ирĕкпе хăвартăм,
Анђах камшăн хăвартăм"?

Тутăх уҫă ҫĕмĕрлет,—
Тĕрме уҫса кĕреҫҫĕ.
Шухăша кайнă Кођупей

Шухăшĕнђен вăранаť,
Урăх шухăш шухăшлаť:
    Ак ман пата хĕрхенсе
Йунлă çула ăсатма.
Хĕрес палли айĕнђе
Мана йертсе кайакан,
Пур çылăха каçарса,
Хурлă ђуна пусарса,
Ырă сăмах калакан—
Асап курнă Христосăн
Таса ўђĕпе, ыр йунне
Кунта илсе çывхараť.
    Христос йунне йышăнса,
Таса ђунпа хăватланса,
Вилĕм хирĕç хăйуллă
Тухам ђунтан савăнса,
Ĕмĕр пĕтми пурнăçа
Кĕрем ђунпа пурăнма"!
    Хаљ апăршпа Кођупей
Хватлă турă умĕнђе
Ĕмĕр, ĕмĕр пурнакан.
Ђăн ыр турă умĕнђе,
Пĕтĕм ђунтан хуйхăрса,
Хатĕрленет кĕл тума.
    Пур хуйăха турă умне
Хурлăх ђĕри ăшĕнђен,
Кĕлĕ сăмах каласа,
Кăларса хăйма шухăшлаť.
    Анђах килђĕ кĕтмен çын,—
Кĕтмен хăна курăнђĕ—
Тискер Орлик ун умĕнђе.

Хĕн-асаплă Коҫупэй
Унтан ыйтат̆ йĕсĕнсе:



Анҫах килҫĕ кĕтмен ҫын,—
Кĕтмен хăна курăнҫĕ—
Тискер Орлик ун умĕнҫе.

„Хайар етем. кала-ха
Мĕншĕн килтĕн ес кунта?
Ман йулашки çĕрĕме
Мĕншĕн капла Маçеппă
Канçĕрлесе măшкăлаť?

**Орлик:**

Сана ыйтса пĕтермен
Тĕпђеп сана, ђас кала!..

**Кођупей:**

Епĕ сана каларăм,
Мана пăрахса кай кунтан.

**Орлик:**

Кетмăн улпут хушнипе
Тата пĕр ĕç пĕтмелле.

**Кођупей:**

Мĕн ĕç тата пĕтмелле?
Мĕн ыйтнине пурне те
Нумай пулаť калани.
Мĕскер пĕлес килнине
Епĕ пурне те каларăм...
Ђăтаймасăр пур хĕне,
Анђах суйса каларăм:
„Епĕ ђейе, усал çын;
Кетмăн тĕрĕс пурăнаť,
Кетмăн ырă çын“, тесе
Епĕ сире каларăм.
Тата урăх мĕн кирлĕ?

**Орлик:**

Епир сана пĕлетпĕр,—
Ку таранђен ирĕкре
Шутсăр пуйан пурăнтăн;

Пайтах мулсем пытарса
Тикаҥккăра[1]) ес лартнă.
Санăн пуçу касăлаĭ;
Пуйанлăху пĕтĕмпе
Çар хыснине каймалла:
Çапла хушаĭ ыр саккун.
Йулашкинҗен еп сана
Мĕн тăвасса хушатăп:
Уçса кала халъ мана,—
Ăçта санăн мулусем
Пытарăнса ларaççĕ?

Коҙупей:

Тĕрĕс сăмах каларăн.
Хам пурăнăçăм тăршĕнҗе
Ҕăнах мана виçĕ мул
Савăнтарса пурăнҗĕç:
Малтанхи мул—ман ыр йат,
Сиртен курнă хĕн-асап
Вăл ыр мула пĕтерҗĕ.
Иккĕмĕш мул—хĕрĕн ыр йаҗĕ,
Вăл ыр йата тавăрас çук,
Вăл ырă мулшăн тăрăшрăм,
Çĕрĕн-кунĕн сыхларăм;
Вăл ыр мула Маçеппă
Вăрттăн кайрĕ вăрласа.
Виççемĕш мул-йулашки,
Хампа пĕрле вăл мула
Илсе кайап тур умне,

---

[1]) Тикаҥккă—Коҕупей йалĕ пулнă.

Виççӗмӗш мул—Маçеппӑ
Хирӗç татса парасси.

**Орник:**

Ват çын, пӑрах халь ӗнтӗ
Пушӑ сӑмах калаçма,—
Йулашки хут куратӑн.
Ӑслӑ шухӑш шухӑшла,
Калаç, йӗркеллӗ çын пек.
Хӗн-хур курас килмесен—
Хӑвӑрт кала ыйтнине.
Каламасан, çӗнӗрен
Курӑн халех хӗн-асап.
Ӑçта хутӑн укçуна?

**Коҫупей:**

Тискер ҫура! йӗрӗнҫӗк!
Хӑçан ҫейерех тӗпҫесе
Хӗн кӑтартса пӗтерен?
Кӑшт тӑхта-ха, пар мана
Тупӑк ӑшне кӗрсе выртма.
Вара кайран ман киле
Ман пурлӑха ухтарма,
Ман пурлӑха, пур мула
Кайӑр ҫасрах çаратма.
Иксӗр тискер кетмӑнта
Ман пурлӑха хисеплӗр.
Йунлӑ тискер алӑпа
Мӗн пур кил-çурт хушшинҫе,
Нӳхрепсене тустарӑр.
Ыр сатсене пӗтӗмпе
Йӑвӑçсене пӗтӗмпе
Касса ватса пӗтерӗр,

Пур кил-çурта çунтарăр.
Пĕрле унта хĕрĕме
Йертсе кайăр хăвăрпа.
    Хĕрĕм хăйех курне тэ,
Ăçта мулсем ларнине,
Кала кала кăтартĕ.
Турă йаҫĕпе тархаслап—
Халĕ мана канлĕх пар!

Орлик:

    Çта пытартăн укçуна?
Хăвăрт кăтарт! кăтартмастăн-и?
Укçу ăçта? ҫас кала!
Каламасан хĕн пулĕ.
    Лайăхрах, тĕлпе шухăшла,—
Ҫĕпместĕн-и?.. ес капла...
Каллах асап кăтартам.
Ей! палаҫ!..
    Палаҫ килҫĕ... хĕн-асап...
Çĕр каçаҫҫен хĕн-асап!
Ах, пит хĕн, пит асап!
Çта-ши кетмăн—усал çын?
Хăйĕн çĕлен кăмăлпе,
Укĕнес шухăш килесрэн,
Çта-ши тарнă Маçеппă?
Çут пўлĕмре Маçеппă,
Усал тискер ĕç çинҫен
Пĕлтермесĕр, ырă хĕре
Ăăплантарса çыврăранă.
Хăйĕн çамрăк хресна хĕр
Ырă вырăн умĕнҫе
Пуçне ҫиксе Маçеппă

Тĕксĕм шухăш шухăшлаť,
Ним ҫĕнмесĕр вăл лараť.
Ҫунĕ виттĕр шухăшсем
Хура сивĕ шухăшсем,
Пĕлĕтсем иртсе кайнă пек,
Ирте ирте кайаҫҫĕ:



Хăйĕн ҫамрăк хресна хĕр
Ырă вырăн умĕнҫе
Куҫне ҫиксе Маҫеппă
Тĕксĕм шухăш шухăшлаť.

„Вилет ăссăр Коҫупей.
Ăна ҫăлма ним май ҫук.
Мав ĕҫ пулса ҫитес ҫух,
Манăн ирĕк ҫирĕпрех
Вăйлă, хăватлă пулмалла!
Манăн ирĕк умĕнҫе
Тăшман пуҫĕ тайларах,
Хиҫеплерех тăмалла!
Искрапала Коҫупей
Ман алăран ҫăлăнас ҫук.
Иккĕш пĕрле вилмелле“.

Анҫах ҫывăрса выртакан
Ыр хĕр ҫине пăхаҫ те,
Ҫапла шухăш шухăшлаҫ:

„Ах, ах... туррăм, ку хĕре...
Ку таранҫен халĕ вăл
Пĕр хуйăхсăр пурăнаҫ.
Вăл пĕлмесĕр пулас ҫук

Виҫкĕн пуртă ыран ир
Тискер ўкĕ пуҫ ҫине...
Пуртă сасси йантăраса
Пур тĕнҫене илтĕнĕ
Тĕнҫе сасси мĕскĕне
Илтĕнмесĕр йулас ҫук.

Ах, еп ĕнтĕ ăнлантăм:
Пăлханакан пурнăҫлă,
Мăн шухăшлă етемĕн
Пурăнас пулаҫ тăр пĕҫҫен,—
Ҫил-хусăрка килсессĕн,
Ху арăмна ан йăхăр.

Хăравҫах планпа ыр ута
Пĕр лав ҫумне кўлес ҫук.
Сыхланмасăр ухмах пек
Ухмахлăха парăнтăм...

Мĕскĕн кайăк—Марийе
Мĕн пур пурнăҫ савнăҫне
Мĕн пур хаксăр ырлăха
Мана паҫĕ парнене—
Мана тискер ват ҫынна
Еп мĕн тăвас шухăшлап?!
Ăна ҫапма шухăшлап“!..

Кетмăн пăхаҫ хĕр ҫине:
Канлĕ ыр вырăн ҫинҫе
Ҫамрăк, тутлă ыйăхпа
Канлĕ ҫывăраҫ ҫамрăк хĕр.
Ăна тўлек, ҫут ыйăх
Хуллен савса аҫашлаҫ!
Ҫипер тути уҫăлнă,
Ырă ҫеҫек пек курăнаҫ.
Ҫамрăк кăкри пит тўлек,
Хуллен сывлаҫ йерипе.
Ыран, ыран... Маҫеппă,
Пĕтĕм тўпе ҫĕтресе,
Унтан куҫне уйăраҫ.
Тăрса хуллен вăл утаҫ
Хўхĕм йăвăҫ пахҫине—
Шăп тăракан пахҫана.
Украйнă ҫĕр пит тўлек.
Ҫут ҫанталăк йанкăрах.
Сўлти ҫăлтăр ушкăнсем
Йăлтăртатса пăхаҫҫĕ.
Уҫă сывлăш тĕлĕрет,
Ыйха ҫĕнсе тăраймасҫ.
Тирĕк йăвăҫ ҫулҫисем
Кĕмĕл майлă курăнса
Хуллен-хуллен ҫĕтереҫҫĕ.
Анҫах кетмăн шухăшĕсем,
Ҫунне тулнă туллийех.
Ҫўлти ҫăлтăр ушкăнĕсем,
Айăплакан куҫсем пек,
Тĕксĕм ҫунлă Маҫеппă
Мăшкаласа пăхаҫҫĕ.

Сатри тирĕк ушкăнсем,
Пĕрле тăрса йĕркипе,
Пуçĕсене ухлаççĕ;
Тӳресем пек пит хуллен
Пăшăлтатса йерипе
Пĕр-пĕринпе пуплеççĕ.

Тискер ђунлă кетмăна
Çулахи çĕр тĕттĕмĕ,
Ăшă çĕрхи ырă сывлăш
Пăсăк сывлăш тулнă пек,
Хура, тискер тĕрме пек.

Ах... васартăк... кăшкăрни,
Хуллен-хуллен кăшкăрни,
Хуллен-хуллен
Тĕрме йенђен илтĕнет,
Маçеппăна туйăнать:
Йе тăмана кăшкăрни,
Тискер кайăк улани,
Йе хĕн-асап куракан
Ђăтаймасăр пуљ кетмăна.

Анђах хуллен вăрăммăн
Йăнăшнă сас илтĕнсен
Кетмăн тискер савăнса
Сасса хирĕç кăшкăрнă.

Иртсе кайнă вăхăтра,
Ĕлĕк вăрçа тухсассăн,
Ватă кетмăн—Маçеппă
Сапелăпа йунашар,
Кàмалейпа йунашар,
Çак... Кођупейпе пĕрле...

Вут-хĕм виттĕр, хир тăрăх;
Йулан утпа сиктерсе,
Çапла тискер савăнса,
Пĕтĕм ђунтан кăшкăрса
Пĕтĕм хире йантăратнă.
Хĕвел-тухăç хĕрелет,
Пĕлĕте хитре ыталаť.
Сăртсем, варсем, йăвăçсем,
Ўссе ларан вăрманăн
Кăтра çўç пек тăррисем,
Ўссе ларан тырăсем,
Йухса выртан çут шывăн
Авкаланђăк хумĕсем
Йăлтăртатса курăнђĕç.
Ирхи ыр сас выљаса
Сывран çынна вăратрĕ.
Анђах Марийе вăранман,
Тутлă çывăраť тĕлĕрсе,
Халђ ун патне çын кĕрсе
Ун урине тытнине
Ыйăх виттĕр туйаť.
Вăл йăл кулса вăранђĕ;
Куçне уçса пăхрĕ те,
Ирхи хĕвел çуттипе,
Куçне каллех хупларĕ;
Аллисене тăсрĕ те
Майсăр тутлă, пит ырă.
Ађашлакан канлĕхпе
Пăшăлтатса каларĕ:
„Ку кам? есĕ-и, Маçеппă"?..
Анђах урăх сасă ăна



Хирĕç калаť таварса...
Ах... ах, туррăм! мĕнле ку...
Вăл хыт ђĕтрет, хыт пăхаť...
Ун умĕнђе хăй амĕш.

**А м ĕ ш:**

Ан ђĕн, ађам. ан шарла,
Пире капла ан пĕтер:
Çĕрле пĕђђен сыхланса
Кунта кĕтĕм сан патна.
Сана ђунтан тархаслап,
Куç çўлпеле тархаслап.
Пайан пуçне касмалла...
Вĕсен тискер кăмăлне.
Санран пуçне урăх çын;
Çемçетес çук никам та...
Ах, çăл аçуна!..

**Х ĕ р е:**

(Пит хыт хăраса) Мĕнле атте?
Мĕнле пуçа касмалла?

**А м ĕ ш:**

Ку таранђен пĕлместĕн-и?..
Çук? есĕ пушă хирте мар,—
Есĕ патша çуртĕнђе:
Есĕ ăна пĕлмелле—
Кетмăн вăйĕ пит хайар.
Тăшмансене йеплe вăл
Хĕрхенмесĕр пĕтерет.
Патша ăна ĕненет.
Ку ĕççене пурне те
Есĕ пĕлсе тăмалла.
Анђах епĕ куратăп:

Ху хурлăхлă тăванна
Маçеппăшăн ес прахан:
Тискер ĕç... сут тунă ђух,
Аçун пуçне кастарма,
Йулашки хут калаçса,
Тӳре сăмах татнă ђух,
Ес çывăрса выртатăн...
Еп куратăп халъ ĕнтĕ,—
Епир санпа пĕр-пĕрне
Йут çын вырăнне иккен...
Савнă хĕрĕм Марийе!
Аса ил-ха хăна ху!
Ђуп васкаса ун патне,
Ури умне ес ӳксе,
Маçеппана тархасла,
Аçун пуçне çăлса хăвар,
Пирĕншĕн анкĕл пул, ађам!
Ыр куçупа пăхсассăн
Тăшман алли çыхăнĕ,
Касас пуртă алăран
Çĕре ӳкĕ вĕçерĕнсе.
Ђасрах ђуп... хуш кетмăна,
Ес каланă сăмаха
Хăварас çук тумасăр:
Ес кетмăншăн ыр йатна,
Хăвăн тăван кил-йышне,
Турра мантăн.

**Х ĕ р ĕ:**

Мĕн ку капла манпала?
Атте... кетмăн пуç касас...
Анне кунта ман патра

Куç-çӳлпеле тархаслаŷ.
Çук, йе ман ăс пăтранса,
Йерсе кайап... ухмаха...
Ах, ку тĕлĕк пулђĕ пуљ...
Тĕлĕк йышши шухăш пуљ...

**А м ĕ ш:**

Ађам, турă санпала,
Çук, çук, ађам тĕлĕк мар
Ку таранђен пĕлместĕн-и?
Сан ыр йата çĕртнĕшĕн,
Сана мăшкăл тунăшăн,
Аçу ђунтан çиленсе,
Ђăтаймасăр мăшкăла,
Усал тăшман кетмăна
Хирĕç тавăрас шухăшпа
Хыпар пађĕ патшана.

Йунлă хăрушă асапа
Ђăтаймасăр ирĕксĕр,
Аййăпнă пек хăй çинђен
Мĕскĕн аçу, аптраса,
Пулман ĕççем каларĕ:

„Кетмăн çине çиленсе,
Суйа-суйса калараăм
Ухмах çын пек намăссăр
Елеклесе калараăм“,
Тесе ăна ирĕксĕр
Калаттарђĕç хĕнесе.

Тĕрĕс хыпар панăшăн
Пађĕ тăшман аллине.
Пайанхи кун ун пуçне

Çарă халăх умĕнҫе
Тискер пуртă касмалла.
Ку таранҫен вăл кунта
Кетмăн тĕрми пашнинҫе
Питĕрĕнсе пурăнаť...
Ку пур усал хуйăха
Ес пĕлмесĕр пулас çук!?

**Х ĕ р ĕ:**

Ах, ах, туррăм!
Мĕскĕн, мĕскĕн, ман атте.
Вилнĕ çын пек сивĕнсе
Вырăн çине хĕр ўкнĕ.
Тĕрлĕ, тĕрлĕ çĕлĕксем
Усалланса курнаççĕ.
Çутă хурăç сăнăсем
Йăлтăртатса курнаççĕ.
Ав пупенсем[1]) çапаççĕ.
Ав кетмăнăн çаррисем
Ҫуптараççĕ сиктерсе
Çар ушкăнĕсем вырăна
Ав тăраççĕ талашса.
Вĕрен шыв пек вĕресе
Халăх ушкăн пăтранаť.
Мĕн пур етем ҫĕрисем
Хытă ҫĕтĕреççĕ кĕтнипе...
Çĕлен хўри йĕрипен
Авкаланса выртнă пек,
Хир варринҫи вăрăм çул
Авкаланса курăнаť:

---

[1]) Кăшкар çине тир çĕлесе мусыккă каламалли йапала.

Кукăр-макăр çул тăрăх,
Çул тăршшĕпе туллийех
Халăх ушкăнĕ йерипен
Пĕр май утаť сикленсе.
Хир варринђе аслăк пек
Тискер такан курăнаť:

Такан çинђе савăнса
Пуç касакан—тискер çын
Калла-малла уткалаť,
Выçă тискер кайăк пек
Хăш ђух турă аллипе
Пуртă тытаť выђаса
Хăш ђух тĕттĕм халăхпа
Хулăм пуплет савăнса.

Йĕри-тавра пĕтĕм сас
Шавлаť пĕрле пĕтĕшсе:
Пур хĕр-арăм кăшкăрни,
Пĕр-пĕринпе йатлаçни,
Кулса сăмах калаçни,
Ўпкелесе пуплени—
Тĕрлĕ-тĕрлĕ çын сасси
Йĕри-тавра илтĕнет.

Ак сасартăк çын сасси,
Вăйлă саспа кăшкăрни
Хайар касса илтĕнђĕ—
Шăп ђарăнђĕç сасартăк.

Ним шавламан вăхăтра,
Хăруш сассăр вăхăтра
Ут ђуптарса пынипе
Тапăртатни сас илтĕнет.

Старшинасем хушшинҫе,
Вăрçă çынсем варринҫе,
Аслă кетмăн йуланпа
Йĕпкĕн хура ут çинҫе
Пыраҫ хайар сиктерсе.
Леррех Кейӳ çул çинҫе
Пĕр урапа çывхараҫ.
Вăл урапа йеннелле
Пĕтĕм халăх çавранса
Ҫунтан пăхрĕ хăраса.
Пĕр айăпсăр Коҫупей
Ларса пыраҫ лав çинҫе.
Вăл пĕр хĕн-хур асапшăн
Пур тĕнҫене каçарнă,
Никама та çиленмест;
Турра ҫунтан ĕненсе
Таса ҫунпа хăватланнă.
Унпа пĕрле лав çинҫе
Тӳлек Искра, путек пек,
Ним ҫĕнмесĕр, кăмăллă
Ларса пыраҫ йунашар.
Ак лав тăҫĕ ҫарăнса.
Сасă илтĕнме пуçларĕ,—
Хыттăн илтнет кĕл сасси;
Катилран кăвак тĕтĕм
Вилес çынсен ҫунĕшĕн
Халăх сассăр кĕл тăваҫ.
Искрăпала Коҫупей
Хĕн-хур асап курнăшăн,
Тăшмансене каçарса,
Кĕл тăваççĕ тăшманшăн

Ак утаҫҫӗ... улхаҫҫӗ...
Такан ҫине улӑхрӗҫ...
Ак сӑх-сӑхса Коҫупей
Вутӑ суркам ҫине ҫас
Пуҫне хуҫӗ хӑйулла.
Пӗтӗм халӑх ушкӑнӗ,
Тупӑкри пек пӗр сассӑр,
Чям ҫӗнмесӗр шӑп тӑрат.
Вӑйпа сулса йанипе
Пурта йӑлтӑр курӑнҫӗ!..
Касса татнӑ етем пуҫ
Сиксе ӳкрӗ айакка.
Уй-хир тулли пур халӑх
Ҫунтан йаҫӗ ахлатса!
Ун хыҫӗнҫен тепӗр пуҫ
Куҫне мӑҫ-маҫ тӑҫ хупса
Сиксе ӳкрӗ татӑлса!..
Йунпа курӑк хӗрелҫӗ...
Ҫунтан тискер савӑнса
Пуҫ касакан ик пуҫа,
Ҫӳҫӗсенҫен йарса тытса,
Аллипеле йӑвӑррӑн,
Халӑх пуҫӗ тӗлӗнҫе,
Хӗпӗртесе силлерӗ.
Ҫапла касрӗҫ етем пуҫне.
Хуйха пӗлмен вӗт халӑх
Утаӑ хӑйӗн шухӑшпе
Хыпаланса килелле.
Ӗмӗртеппех халӑхӑн
Ку таранҫен вӗт шухӑш,
Пӗр-пӗрипе ҫул тӑрӑх

Пĕҭĕкçĕ шухăпісем çпнӛӑн
Йумахласа вăл утаҭ.
Хир йерипен пушанаҭ.



Çӳçĕсенҭен йарса тытса,
Аллипелен йăварăн,
Халăх пуçĕ тĕленҫе,
Хĕпĕртесе силлерĕ.

Çав вăхăтра çул урлă
Ик хĕр-арăм васкаса
Ђупса каçрĕç хашкаса;
Пит тусанлă иккĕш те;
Хирпе ђупса ывăннă;
Хаљ пуç каснă вырăна
Ђунтан ђупса пыраççĕ,
Хыт хăраса ыйтаççĕ...
„Çитеймерĕр вăхăтлă“!
Тесе пĕр çын пÿрвипе
Такан йенне кăтартрĕ.
Унта тискер такана
Ёнтĕ ватма пуçлана.
Хура тумтир тăхăнса,
Пуп пуçланă кĕл тума.
Ик хусах тăрмашса
Йуман тупăк çĕклесе
Улăхтарнă лав çине.
Йулан утсем умĕнђе
Çын-пуçне каснă вырнтан
Тĕксĕм, хайар Маçеппă
Тавăрăннă килелле.
Ăш пушанса йулнă пек,
Хăй ăшĕнђе шухăшпа
Асапланнă Маçеппă.
Ун çывăхне никам та
Ђунпа хăйса пыройман,
Ним ђĕнмесĕр ђуптарнă.
Шур кăпăка ÿкеђђен
Хура лаша васкаса
Ăна çил пек вĕçтернĕ.



Ёлкӗреймерӗр есир.

Киле çитсен Маçеппă.
„Мĕнле ĕнтĕ Марийе“?
Тесе ыйтнăваскаса.
Кĕтмен сăмах вăл иятет,—
Ăна хирĕç хăраса
Сăмах хуллен калаççĕ...
Ирĕксĕрех хăраса
Марийенĕн пӳлĕмне
Кĕрсе кайаҫ Маçеппă.
Çут пӳлĕме кĕҫĕ те...
Сассăр шăппăн, хуйăх пек,
Пӳлĕм лараҫ пушанса.
Кайаҫ йăвăç пахҫипе—
Утса çӳрет пăтранса.
Мĕн пур йăвăç тĕммисем,
Пур пахҫари кĕтессем,
Çуртсем тавра пур çĕртре,—
Кил-çурт лараҫ пушанса;
Пурте пушă, ним те çук;
Пĕтĕм кил-çурт, ҫунсăр пек,
Тăрса йулнă тăлăха.
Йĕрри-палли те йулман—
Прахса кайнă!.. Мĕн тăвас?
Ҫурисене хăй патне
Ҫĕнет хăвăрт,васкатса.
Çитрĕç йӳрек сертӳксем[1]);
Карĕç хăвăрт ҫуптарса
Марийене шырама.

---

[1]) Сертӳксем тесе кетмăн хăй укçипе тытса усранă çарă халăхне каланă.

Тискер сасăпа кăшкăрса
Хăвалама ҫуптарҫĕҫ
Хартлатаççĕ ыр утсем,—
Йулан утпа пур йенне
Сиктереççĕ ҫурисем.



Куçа хупса уçас ҫул
Питĕ кĕске вăхăт та
Маçеппăна пит хаклă;
Вăхăт иртет, вĕçнĕ пек.
Анҫах Марийе тавăрнмасӳ.
Кампа йепле Марийе
Килтен тухса тарнине,
Ыйтсан пĕлмен никам та.
Ним ҫĕнкесĕр Маçеппă
Шăлне шатăртаттарать.
Кил хушшинҫи ҫурисем,
Нимскер сассăр хăраса,
Килте ларнă ҫĕтресе.
Вут вĕрекен ҫĕрне,
Вĕлерекен емсл пек,

Хайар хуйăх шухăша
Хупса лартнă Маçеппă.
Çут пÿлĕме питĕрнсе,
Кетмăн ларнă тăр пĕҫҫен.
Ыр хĕр вырăн умĕнҫе
Хура çĕрхи тĕттĕмре,
Тисвер куçне хупмасăр,
Етем пĕлми асаппа,
Асапланса вăл ларать.
Ир çутăлса килсессĕн,
Ун ҫурисем килелле
Пĕрĕн-пĕрĕн таврăнҫĕç,
Аран-аран лашисем
Сулкаланса утаççĕ,—
Пиçсе çитнĕ ыврăнса.
Утсем çинҫи таврашсем,
Хырăмлăхсем, такансем,
Çивиттисем, йĕвенсем
Шур кăпăкпа витĕннĕ,
Хĕрлĕ йунпа хĕрелнĕ,
Ванса пĕтнĕ пĕтĕмпе
Çулпа йулнă çухалса.
Çук, вĕсенҫен пĕри те
Тарнă мĕскĕн хĕр çинҫен
Хыпар илсе килеймен.
Хĕр тĕнҫере пурăнни,
Ним паллăсăр пĕр йĕрсĕр,
Пушă сас пек çухалнă.
Амĕш пĕҫҫен куҫанса,
Хăваласа йанăскер,
Мĕскĕн кĕлмĕç хурлăхне

Ыталаса хыт тытса
Пушă тĕттĕм пурнăçа
Хайпе пĕрле илсе кайнă.

**Виççĕмĕш йурă.**



Украйнă çĕр пуçлăхне
Ђунтан тĕпрен куљанни
Ĕç ĕçлеме ђарас çук.
Ăша тытнă шухăша
Хватлантарать куллен-кун,
Вăл малалла хăйуллă
Ђаранмасăр ывтăлать.
Çыру çырса, калаçать.
Çав вăхăтра Маçеппă
Тăшман куçне курăнма,
Ĕнентерме хăй çинђен,
Хăй ултавне пытарма,
Йури ђирлĕ сгем пек,
Асап курса выртнă пек,
Вырăн çинђен тăмасăр,
Сывалассăн мăкăрса,
Выртать ђунтан йынăшса.
Йăрм-тавра лекĕрсем
Кускалаçа çÿреççĕ.

Кӧтмӑн ҫапла йӑнӑшаҭ:
„Вӗри шухӑш пӗҫертсе,
Йӑвӑр ӗҫпе тертленсе.
Хӗн-хур курса, куљанса,
Ҫӗрсе ҫитрӗм ватӑлса,—
Вилес вӑхӑт ҫитрӗ пулӗ;
Ӗнтӗ ҫӗрӗк тӗвђене
Ђас хӑваран пӑрахса;
Вилес умӗн ӳкӗнсе
Кӗл тӑвӑттӑм турӑмма“,
Ҫапла макраҭ Маҫеппӑ.
Хӑвӑрт пупсен пуҫлӑхне
Вӑл ђӗнтерсе килтерђӗ.
Суйа ђирлӗ ҫын умђе
Архийерей кӗл тӑваҭ.
Вилес ҫын пек пуҫ ҫине,
Кӑвак кӑтра ҫӳҫ ҫине
Усал ђейе ҫӳҫ ҫине
Таинствӑри йӑвӑҫ ҫу
Йухаҭ ҫемҫе йӑлкӑшса.
— Вӑхӑт иртет куллен-кун.
Мускав кӗтет тӑшмана
Анђах кӑлӑх вӑл кӗтет.
Вӑл авалхи тӑшмансен
Вил тӑприсем хушшинђе,
Мускав хули патӗнђе,
Швет ҫаррисен йушине
Хатӗрленет ђыс тума.
Анђах Карӑл сасартӑк
Хайӗн ҫарри халӑхне
Украйналлa ҫавӑрнӑ.

Çапла çитрĕ кĕтнĕ кун.
Хай Маçеппă, ҫирлĕ çын,
Вилес, ватă, çĕрĕк çын
Вилĕ шăтăк умĕнҫе
Ĕнерхи кун макăракан,
Аран, хуллен йăнăшакан
Вырăн çинҫен ывзлса
Тăҫĕ хайар хăватпа.
Халĕ ĕнтĕ Маçеппă
Патшан хăватлă тăшманĕ;
Мăн кăмăллă куçĕпе
Çарă халăх умĕнҫе.
Ним ыванас мĕн шухăшсăр
Йăнăштарать пит хайар;
Алла виҫкĕн хĕç тытса
Вут-çĕçĕм пек сулкалать;
Тесна шывĕ йенелле
Ĕлĕк çапла картинал[1])
Ҫейе ҫунлă ват етем,
Ватă пурăнăç пуснă пек,
Аран утнă кукленсе;
Папа[2]) çĕлĕк тăхăнсан
Сывă, çамрăк етем пек
Тӳрĕ çӳре пуçланă

---

[1]) Папаран кĕçĕнтерех аслă пуп-тавăрашсене Қатоликсен ҫиркӳнҫе картиналсем, теççĕ. Папа 5-мĕш Сикст хăй картинал вăхăтĕнҫе çĕрсе çитнĕ ватă, ҫирлĕ çын пек, аран çӳренĕ. Кайран папана суйласан сывалнă.

[2]) Папа тесе Рим хулинҫи патриарха (пуп-пуçлăхне) калаççĕ; (католиксен ҫăн аслă пуп-пуçлăхĕ).

Çунатланса çак хыпар
Вĕçет тĕнђе тăршшĕпе;
Йентĕ пĕтĕм Украйнă
Тĕксĕм шăвлат̆ йерипе:
„Ку Маçеппă (пăхăр-ха),
Пăрахса Петр патшана,
Карăл умне пуђука
Кайса хуђĕ парăнса“.
Çапла халăх калаçат̆.
Çулăм çунат̆, йăлкăшат̆,
Хĕвел хĕрелсе пăхнă пек.
Йун курăнат̆ хĕрелсе:
Халăх вăрçа тапранат̆.
Петĕр патша çиллине
Кам халама пултарас?
Сопоросенђе, пур çĕрте
„Анахвема“[1]) çĕмĕрлет.
Кетмăн сăнне Клуховра[2])
Пуç касакан тăрмалат̆.
Халăх сасси шавласа
Урăх кетмăн хатĕрлет.
Петĕр патша васкаса
Пушă хирти вырăнтан,
Сив Йенисçей[3]) хĕрĕнђен,
Искрăпала Кођупей
Кил-йышсене тавăрат̆.

---

[1]) Анахвема—ђăн тĕне ĕкенекенсенђен (ђиркӳрен) уйăрни пулат̆.

[2]) Клухов йатлă хулара, патша хушнипе, малађ Маçеппă сăнне, етем çакнă пек, çакнă.

[3]) Йенисçей—Çĕпĕрти аслă шыв йађĕ.

Вӑл вӗсемпе куҫанса
Пӗрле куҫ-ҫулъ йухтарай̆.
Аҫашласа вӗсене
Ҫӗнӗ ырлӑх кӑтартай̆:
Ыр йат парай̆, мул парай̆.
Йулан-утпа, вут-хӗм пек,
Ăста ҫӳре пӗлекен.
Кетмӑн тӑшман—ват Палей,
Ӗлӗк пуҫӗ кайнӑскер
Хӑваласа йанӑскер,
Тӗттӗм сивӗ вырӑнта—
Пушӑ ҫӗртен Ҫӗпӗртен,
Патша патне Украйна,
Ҫун савӑнса, ҫуптарай̆.
Хура халӑх пӑлханни
Тӑлӑх йулай̆ тӑрӑлса,
Халӑх ҫӗтрет хӑраса
Ҫеҫел[1]) пуҫне кастарҫӗ.
Сапорошри атаман
Пурт айӗнҫе каҫӑхрӗ.
Вӑрҫӑ ҫапне йуратса
Патша ҫӗлӗк пӑрахса,
Вӑрҫӑ ҫӗлӗк пӑрахҫа,
Сан та куну инҫех мар:
Сана, Карӑл, айакран
Полтав тавра выртакан,
Тӑпра купи курӑнҫӗ.

---

[1]) Петӗр вашта ҫаррисем кетмӑн пурӑнакан хулана (Патурина) турӗса илнӗ ҫух, Ҫеҫел патша ҫаррисем хирӗҫ хытӑ ҫапӑҫнӑ.

Полтав йенне патша та
Хăй çаррине хăвалаť.
Çар халăхсем, тăвăл пек,
Вěçсе çитрěç вырăна.
Тăшман шветсен çаррисем,
Петěр патша çаррисем,
Тӳрем уй-хир варринђе,
Ђейе, ăслă шухăшпа
Пěр-пěрине хупларěç.
Çапла хайар çапçакан,
Тем ђул хăйěн ěмěрнђе
Хайар вăрçса, çапăçса,
Патак çисе курнă çын,
Çапçађђенех йун сиссе,
Хыт ӳсěрлсе тăракан,
Хайар, тискер çапçасса
Ђăтаймасăр кěтекен,
Алли ђунтан кěçěтсе,
Тăшман хирěç савăнса,
Тухаť хайар çапăçма.
Хватлă Карăл çиленет:
Ěлěк Нарвă[1]) патěнђе
Вырăс çарри халăхě,
Çěтěк таркăн ушкăн пек,
Таткаланђăк пěлěт пек,
Нађар, сывсăр курăннă.

---

[1]) 1700-мěш çулта Аслă Петěр швет королěне Карлпа XII вăрçа пуçланă. Шветсен хули Нарвă патěнђе Карл 8000 çарă халăхěне Петěрěн 35000 вăрçа пěлмен, çарă халăхне çапса çěмěрнě.

Халĕ вырăс çаррисем
Ĕлĕкхи пек наҫар мар:
Çарă тăраҫ тӳрĕ çип пек
Хăватлă, хӳхĕм курăнаҫ,
Патша хушнă сăмаха
Тума хатĕр савăнса,
Иӳрĕк, канлĕ, хăйуллă,
Штык ушкăнсем авнас çук.

„Ыран вăрçă пуçланаҫ"!
Тесе короҫ шухăшлаҫ.
Шветсен йенҫе çар халăх
Иăвăр ыйăх çывăраҫ.

Анҫах ак пĕр ҫатăрта
Пăшăлтатни илтĕнет:
„Çук, куратăп ĕнтĕ епĕ,
Ҫунăм савнă Орликăм,
Ĕпир капла вăхăтсăр
Васкарăмăр иксĕмĕр;
Хайуланса, çиленсе
Тытăнтăмăр ку ĕçе,

Анҫах шанҫăк пит сахал,
Турă тивлет парас çук.
Авалтавхи шухăшăм,
Тăвас тенĕ ĕмĕтĕм
Çухалҫĕ пуҫ ахалех

Тĕрленни те вырăнсăр...
Çапах тесе сулнă ал
Уссăр иртрĕ вăркăшса.
Епĕ—ват çын, ухмах пек,
Карла йăнăш ăнлантăм.



Карăл çамрăк ađа хаљ,
Хастарлă пек курăнаť:
Ик-виç тапхăр вăрçăра
Пултараť вăл çĕнтерме;
Тăшман ларнă đатăра,
Каçхи апат ас тивме,
Хăйса пыма пултараť;
Помпă[1]) ўксен—çурăлас đух,
Помпапала калаçаť,
Хăрамасăр савăнса
Кулаť тискер помпăран;
Тўрĕ пеме пĕлекен
Вырăс çынđен кайа мар,—
Çĕрле вăрттăн йăпшăнса,
Тăшман йенне кайса çўрет;
Пайанхи пек хусаха
Персе прахма пултараť,
Суран хирĕç сурана
Киле тупса таврăнаť[2]).
Анđах вырăс паттăрне
Çĕнтереймĕ нимпе те.
Йепле кăмăл килнĕ пек,
Çар халăхне хушнă пек,

---

[1]) Помпă тесе ăшне тар тултарса тунă đукун (метал) đăмрашкана калаççĕ; хăш đух çĕре ўксен, хăш đух вĕçсе пынă đухнех çурăлса пĕрĕхсе кайаť.

[2]) Карăл ыран вăрçă пулаť тенĕ đухне çĕрле вырăс çарă халăхне вăрттăн сăнаса çўреме тухнă. Çул çинđе вăл вут хĕрринđе ларакан хусахсене тĕл пулнă. Đăтаймасăр пĕр хусаха пăшалпа персе ўкернĕ. Ыттн хусахсем сиксе тăнă та пăшалпа персе Карлăн ўрине суран тунă

Ҫак параппан сасснпе
Тур ҫырнипе таврас ҫук.
Вăл ђăхăмҫă, вăл суккăр,
Ђăтма пĕлмен ҫăмăлҫах,
Мĕне шанса-каппайђăк—
Ĕмĕтленет телейе?
Иртсе кайнă телейпе
Вырăс вăйне вăл виҫет.
Тăшман вăйе—ҫĕнĕ вăй—
Ыранхи кун вăрҫăра
Хуҫăлмалла мăйраку.
Намăс мана-хамран хам:
Ват пуҫăмпа, ухмах пек,
Вăрҫа савнă таркăна
Капла савса парăнтăм
Ватă ухмах еп ҫапла,
Ҫамрăк хĕр пек хăраса,
Ун хастарне йуратрăм,
Ђупса иртсе кайакан
Вăрҫă телейне курса,
Суккăрлантăм ват пуҫпа.

О р л и к:

Вăрҫа кĕтсе илер-ха.
Усал ĕҫе тӳрлетме
Вăхăт иртсе кайман-ха,—
Ĕлĕкхи пек Петĕрпе
Каллех тӳрĕ пурнăпăр:
Ыпир ҫапса ҫĕмĕрсен,
Каллех тӳрĕ кăмăлпа
Пурăнмасăр пулас ҫук.

**Маçеппă:**

Çук, халъ иртрĕ вăл вăхăт.
Вырăс халăх патшипе
Тÿр пурнассăм пулас çук.
Пулас ĕçе тăвасса
Нумай пулаť шутлани,
Урăх майлă пулас çук:
Пайтахранпа пулас ĕç
Ђăн сăмахпа татăлнă.

Нумайранпа çиленсе
Вутпа шăвнаť ăш-ђиккĕм.
Асăв панђе вăрçнă ђух,
Пĕрре пĕрле ђатăрта
Хайар, сивĕ патшапа
Çĕрле ĕçкĕ ĕçрĕмĕр.

Ыр савăтсем ерехпе
Тулли кăпăк тулхăрса
Шăтăртатса ларнă ђух,
Ерех вут пек вĕресе,
Илемленсе тăнă ђух,
Хĕм пек хĕрсе калаçса,
Ăш савăнса ларнă ђух,
Тĕрĕс сăмах хăйулла
Хайар Петĕре каларăм...
Мĕн-пур çамрăк хăнасем
Пит тĕлĕнсе хăрарĕç,—
Çунан вут пек çиленсе
Хăй аллинђи савăта
Патша çĕре ÿкерђĕ,
Манăн кăвак мăйăха

Иарса тытрĕ аллипе,
Мăйăха туртса йунарĕ.
Ун ђух епĕ, вăйсăрскер,
Хамăн çилле пусарса,
Ђунтан-вартан çиленсе,
Пур кăмăлтан ăнтăхса,
Çак патшана тавăрма,
Сăмах патăм хама хам.
Ку таранђен пĕр майах
Вăл шухăша ăшăмра
Ађашласа çӳрерĕм.
Çапла амĕш пурнăçра
Хăй ăшĕнђи ађине
Ђунтан-вартан савăнса
Çӳрет ăшра çĕклесе.
Çитсе килђĕ ак вăхăт...
Вăл ман çинђен астуса
Хăй вилиђђен пурăнĕ.
Петĕре асап ктартса
Ăс памашкăн пурăнап;
Ерешлесе ђеђекрен
Çыхса тунă çĕлĕкри,
Ђаплă мухтав çĕлĕкри,
Курăнмасăр ђикекен
Йĕп вырăнне пурăнап.
Авалхи пек çĕнĕрен
Кетмăн мăйăхне тытасшăн
Мăн кăмăллă-мăн патша
Хĕрхенмĕђђĕ ниме те:
Тĕпрен пуйан хуласем,
Ыр вăхăта пурнăçран
Хĕрхенмесĕр паринђђĕ.

Анҫах апла пулас ҫук:
Пирӗн валли ӗмӗт пур...
Кам тармалла вӑрҫӑран—
Ыранхи кун кӑтартӗ.

Патша кун кӑтартӗ.
Куҫне хупа пуҫларӗ.

Хӗвел-тухӑҫ хӗрелет,
Ҫӗн ҫутӑпа ҫуталать.
Тӳрем ҫӗрте, пур ҫӗрте,
Сӑртсем тӑрӑх тупӑсем
Хыт йантраса ҫӗмреҫҫӗ.

Хӗрлӗ тӗтӗм, унӑ пек,
Ирхи хӗвел йенелле,
Пӗлтсем ҫине улӑхать.

Ҫар ушкӑнҫсем йӗркипе
Пит ҫӑкланса пухӑнҫӗҫ.
Туп ҫӑмрисем пит хайар,
Пӑшал пульсем шӑхраҫҫӗ.
Сив сӑнӑсем пит хӑруш
Ҫикме хатӗр тӑраҫҫӗ.

Вӑрҫӑн савнӑ ывӑлҫсем—
Пит хастарлӑ шӑветсем—
Вут-хӗм виттӗр сикеҫҫӗ,
Лакӑм урлӑ ывтӑнаҫҫӗ.

Авкаланса утлӑ ҫар,
Ҫил-тӑвӑл пек, вӗҫтерет.
Вӗсем хыҫҫӑн ҫуран ҫар
Хӑватлӑ вӑйпа утӑмлать,
Йулан утлӑ ҫарсене.
Ҫирӗп вӑйпа пулӑшать.

Вăрçă хирĕ—пур çĕрте:
Ак кунта та, унта та
Çунаҫ, шавлаҫ, çĕмĕрлет.
Вăрçă телей курăнаҫ;—
Пире савса пулăшаҫ.
Персе тартнă тăшмансем,
Ним пĕлмесĕр пăтранса,
Тусан çине ӳкеççĕ.
Роçен[1]) тăраҫ хĕсĕнсе;
Пире парнаҫ Шлиппенпах[2])
Швецсен çарă халăхне—
Ушкăн хыççăн ушкăна
Хĕстеретпĕр çĕнтерсе.
Вĕсен ђаплă йалавсем
Тĕксĕмлене пуçларĕç.
Турă панă тивлетпе
Камшăн утăм вырăнђе
Турă палли курăнаҫ,—
Пире турă пулăшаҫ.
Çав вăхăтра сасартăк,
Çӳлти хватпа хватланса,
Хыт йантракан мăн саспа:
„Тытăнăр ĕçе турăпа“!
Тесе патша кăшкăрнă
Петĕр ђатăр ăшĕнђен
Тухаҫ вăрçа тытăнма.
Хăй йуратнă етемсем
Йĕри-тавра патшана
Хупăрласа тухаççĕ.

[1]) Роçенпа Шлиппенпах—швецсен çарă пуçлăхĕсем.

Патша ӳхĕм ҫиҫĕм пек;
Вут пек, хĕм пек куҫĕсем
Йăлтăртатса пăхаҫҫĕ;



Петр ҫатăр ăшĕнҫем
Тухаĭ вăрҫа тытăнма.

Пиҫӗ-куҫӗ пит хайар;
Пур йенелле, тӑвӑл пек,
Ҫавӑрнкалаӗ йӳрӗк.

Илсе пыҫӗҫ ун умне
Вут кӑвар пек ыр лаша.
Хӑруш вута курнипе
Лаша ҫӗтӗрет пӗвӗпе.
Айаккалла куҫӗпе
Пӑхаӗ лаша сыхланса.

Хӑй хуҫине итлесе
Ҫаплӑ, хӑватлӑ хуҫипе
Мӑн кӑмӑллӑ мухтанса,
Ҫаплӑ лаша вӑрҫалла
Тусан виттӗр вӗҫтерҫӗ.

Кӑнтӑр вӑхӑҫ сывхараӗ.
Хӗвел хӗртсе ҫунтараӗ.
Ҫӗр ӗҫлекен каннӑ пек,
Канса тӑраӗ ҫар халӑх.

Хӑш-хӑш ҫӗрте хусахсем
Йулан утпа ҫупаҫҫӗ.
Ҫар халӑхсем танашса
Вырнаҫаҫҫӗ вырӑна.
Мусӑк сасси ҫаранна.
Сӑртсем ҫинҫе тупӑсем,
Выҫӑ саспа мӗкӗрме,
Ывӑннӑ пек ҫаранса
Тӳлекленсе тӑраҫҫӗ.

Тӳрем ҫӗре йантратса
„Ура“ сасӑ илтӗнет.
Сасӑ йантраса кӑшкӑраӗ:

Çапса çарӑ кӑшкӑрат̆.
Петӗре курса савнат̆.
Çар халӑхӗ умӗнҫен
Петӗр иртрӗ вӗçтерсе.
Вӑл, вӑрçӑ пек, савӑнат̆;
Вӑл, вӑрçӑ пек, пултарат̆;
Хитре, хайар куçӗпе
Виттӗр пӑхса шӑтарат̆,
Çисех йарат̆ куçӗпе.
Петӗр йӑви ҫӗпписем
Унпа пӗрле вӗçеççӗ.
Вӗсем унпа пурӑнса
Ун ирӗкне тӑваççӗ:
Патшалӑхри халӑха
Тытса тӑма пулшаççӗ.
Вӗсем ун йулташӗсем,
Вӗсем ун ывӑлӗсем:
Шереметйӗх—ырӑ çын,
Поур, Репнин тата Прŷс,
Унтах тата Меҥшикӑх—
Телей савса пӑхнипе,
Ҫапсӑр çынтан ҫапланса,
Çур патша пек пулнӑ çын.
Карӑл кӗл пек шуралса,
Асапланса суранпа,
Хӑйӗн кӑвак тумтирлӗ
Çар халӑхӗ умӗнҫе
Çав вӑхӑтра курӑнҫӗ
Ӑна тӗрӗс ҫурисем
Йӑтса тухнӑ вырнӗпех;
Шухӑша кайса хуйхпа

Сикленмесĕр вăл ларат̆.
Кусĕпе пăхат̆ хăраса.
Ђунтан кĕтнĕ вăрçă кун
Карла курнат̆ урăхла:
Хăй кĕтнĕ пек курăнмаст̆
Хуллен сĕлтсе аллипе
Çар халăхне сасартăк
Вырăс йенне кăтартрĕ:
Çапла хушрĕ çапăçма.
Тӳрем уй-хир варринђе,
Тĕтĕм-сĕрĕм варринђе,
Вырăс халăх-çар халăх,
Тăшмана хирĕç тĕл пулса,
Пĕрле çапçа пуçларĕ.
Аçа-çиçĕм сасси пек,
Полтав вăрçи йантрарĕ!
Вутлă хĕм-пăр çунă пек,
Тупă ђăмрисем, пулĕсĕм
Пур йенђен те çутарат̆...
Вут варринђе хастарлă
Халăх, ђĕрĕ хӳме пек,
Çитне çитне курăнат̆.
Вилнĕ ушкăн вырăнне
Çут штыксемпе пĕтĕшсе,
Халăх çитĕнет çĕнĕрен.
Йавăр пĕлĕт вĕçнĕ пек,
Утлă çарă ушкăнсем
Вĕçе вĕçе çитеççĕ.
Çут хĕçсемпе йантратса,
Пĕр-пĕринпе перĕнсе,
Вăйпа сулса касаççĕ.



Вилнĕ халăх куписем
Çитне-çитне параççĕ.
Вĕри ђукун ђăмрисем
Ђарăнмасăр пур çĕрте
Вил куписем хушшине
Шăхра-шăхра ӳкеççĕ,
Сике-сике çĕмреççĕ,
Хура сĕре ђаваççĕ.
Вĕри çын-йун варринђе
Шăхра-шăхра вĕреççĕ.
Шĕвет, вырăс—касăлаť,
Йĕри-тавра, пур çĕрте
Каслаť, ђикнет, вакланаť.
Парапан сасси çĕмĕрлет;
Шăл çĕмĕрсе ылхану,
Йнран кайса калаçу,
Халăх сасси кăшкăрни,
Туп йантраса çĕмĕрлни,
Тупăртатса ђуптарни,
Лаша хуйса кĕçенни—,
Пур йенђен те илтĕнет.
Вилĕм, тамăк-хисеп çук!
Вăрçă халăх хумханаť.
Çав вăхăтра çар пуççем
Çӳлти хватпа хватланса,
Çарă халăх вăрçнине
Хăрамасăр йеррипе,
Хуллен, тӳлек кăмăлпа,
Пăхса, курса тăраççĕ;
Йслă куçпа сăнаса,
Кам çĕнессе малтанах



Виифу тоиён хиеоп сук.

Пăхса лайăх курассĕ,
Тӳлек çĕрте каласса
Çарă халăх вăрçнине
Хака хурса тăраççĕ.
Мускав патши патĕнҫе
Мĕнле етем ку тăрать?
Çӳçĕ-пуçĕ квакарнă...
Икĕ хусах ик йенҫен
Ăна тытса тăраççĕ.
Пурнăç иртсе кайаҫҫен
Пайтах вăрçа курнă çын,
Вутпа çунса тăнă пек,
Вăрçа пăхать савăнса,
Ҫунтан вăрçа туртăнса.
Анҫах ват çын çапăçма,
Вăй çук пирки тухаймасть;
Çапма текех ут çине
Йĕнтĕ текех ут çине
Вăл ларас çук утланса,—
Килтен хуса йанипе,
Тăлăх çын пек тунсăхса,
Çĕпĕр йенҫе пурăнса,
Вăл ватăлса ҫалăхнă,—
Палей текех кăшкăрса
Хусахсене хушаймасть.
Кайăк вĕçсе пынă пек,
Ун сассине итлесе,
Халăх вĕçсе пырас çук!
Анҫах мĕншĕн ун куççем
Йалтăр турĕç, çиçĕм пек?
Хура çĕрхи тĕттĕм пек,

Мĕншĕн çамки хуралҫĕ?
Мĕншĕн капла çиленет?
Вăрçă тĕтĕм, хĕм витĕр
Хăй тăшманне—Маçеппă
Ку сехетре курҫĕ-шим?
Çак вăхăтра ват Палей
Тăшмана хирĕç çапăçма
Тухайманшăн çиленсе,
Хăйне-хăйех ватăшăн
Кураймарĕ пулмалла?
Тарăн шыва путнă пек
Шухăш тĕпне Маçеппă
Путса ларнă пĕтĕмпе.
Вăрçă çине вăл пăхаť.
Йĕри-тавра кетмăна,
Патша хирĕç пăлханнă
Хуеах ушкăн хупăрлаť;
Унпа пĕрле тăвансем,
Старшинасем, çертўксем...
Çывăх, çывăх-инçе мар,—
Çĕнес вăхăт çывхараť!
Урра! епир вататпăр;
Ĕнтĕ шветсем-авнаççĕ.
Ҫаплă сехет курăнаť!
Хура пĕлт пек капланса,
Тискер хуплаť выçăхса.
Петĕр патша савăнса
Ĕçкĕ ĕçет халăхпа.
Тўлек, таса ыр кун пек,
Куçсем ҫаппа çутăлса,
Йалтăргатса пăхаççĕ,

Мăн кăмăллă савăнса
Илемленсе пăхаççĕ.



Патша ĕçки пит хитре:
Ҫунтан-вартан савăнса;
Ҫарă халăх кăшкăраť
Ҫатăрĕнҫе мăн патша
Пуçлăхсене ĕçтерет;
Унта вырăс пуçлăхсем,
Унта тăшман пуçлăхсем;
Вăл пурне те аҫашлаť;

Вăл тыткăна парăннă
Мухтав пире пурăнаҫ!

Тепре тĕртсен-швет тăраҫ,
Шветсем хыҫҫăн утлă ҫар,
Ҫил-тăман пек, вĕҫтерет;
Етем касса пур хĕҫсем
Мăкалаҫҫĕ алăра.

Вилсе ӳкнĕ халăхпа
Аслă уй-хир витĕнҫĕ.
Ҫапла хăш-ҫух уй-хире
Хура шăрҫăк ушкăнĕ.
Ҫаплă пуҫлăх ҫынсене
Ҫунтан савса аҫашлаҫ,—
Вĕрентекен ҫынсемшĕн,
Ăс панăшăн сыв сунса,
Ерех ҫеркки тултараҫ.

Ҫăн малтанах ҫĕннĕ ҫын—
Ҫаплă хăна ма килмен?
Ăҫта тарса пурăнаҫ?
Килмен хăнан хайарлхĕ
Пайанхи кун хупланҫĕ,
Пайтахранхи усал ҫил
Пайанхи кун лăпланҫĕ.

Ăҫта тата Маҫеппă?
Ăҫта усал, ват тăшман?
Иутă пек хăраса
Ăҫта тарса пытаннă?
Мĕншĕн король кунта мар?
Патшана хирҫ тăракан
Пурт айĕнҫе ма выртмаҫ?

Йулан утпа васкаса
Йуш хир тăрăх Маçеппă
Карлпа пĕрле вĕçтерет.
Пурнăç пĕрле вĕсене
Çыхса лартнă иккĕшне.
Вĕсем иккĕш тараççĕ...

Хрушă вăхăт çывăхри,
Ђĕре çунса çиленни,
Вăйлантарать короле:
Хăйĕн йăвăр суранне
Манса кайса ђуптарать;
Пуçне ђиксе ут çинђе
Вырăс хыçран хунипе,
Уй-хир урлă сиктерет,
Унăн шанђăк ђурисем
Ун хыçĕнђен ушкăнпа
Уран çитсе пыраççĕ.

Аслă хире куçпала
Витĕр пăхса ват кетмăн
Король çумĕнђе йунашар
Çил-тăвăл пек сиктерет.
Вĕсем умĕнђе пĕр хутор[1])...
Мĕншĕн капла сасартăк
Ватă Маçеппă хăрарĕ?
Мĕншĕн хутор умĕнђен
Пĕтĕм вăйпа сиктерсе,
Капла таçтан айакран,
Иртсе кайрĕ Маçеппă?

---

[1]) Хутор—йал тулашĕнђе ларакан кил-çурт

Çак пушанса йулнă кил,
Çак çурт, йăвăç пахђисем,
Çак уйалла уçăлса
Тăран алăк кетмăна
Иртсе кайнă вăхăтри
Шухăшсенэ сасартăк
Астутарђĕ пулмалла?
Таса айăпсăрлăха
Пĕтерекен, усал çын!
Палларăн-и çак çурта?
Çак кил, çак çурт авал ђух,
Пит савăнса лараĭђĕ.
Çак кил-çуртра авал ђух,
Пит телейлĕ кил-йышра
Ĕçкĕ ĕçсе савăнса,
Кулса сĕтел хушшинђе
Канлĕ ларса, кинене
Пайтах есĕ ыр куртăн?!
Палларăн-и çак киле?
Палларăн-и çак çурта?
Ак çак тўлек вырăнта
Тўлек анкĕл пурнаĭђĕ.
Çак ыр йăвăç пахђинђен
Тĕттĕм çĕрле анкĕле
Илсе тартăн... Палларĕ.
Ак çĕрлехи мĕлкесем
Саркаланса, кармапса,
Аслă хире алăпа
Ыталаса тăраççĕ.
Симĕс Твепăр хĕрринђе,
Йака ђулсем хушшинђе,

Вырӑс патши тӑшманӗсем
Вырӑс халӑх тӑшманӗсем
Кӑшт тӗлӗрсе выртаҫҫӗ.
Король ҫывраҫ шухӑшсӑр,—
Халь вӑл маннӑ мӑшкӑла—
Полтав вӑрҫи ҫапнине.
Анчах кетмӑн ыйӑхӗ,
Королен пек, тӳлек мар:
Тӗксӗм чунӗ ӑшӗнче
Канҫӗрленсе пӑчӑхаҫ.



Сассӑр ҫӗрле сасартӑк
Маҫеппӑна чӗнеҫҫӗ.
Вӑл варринче... ак пӑхаҫ...
Такам унӑн умӗнче,
Хӑй пӳрнипе йунаса,
Пӳпе хуллен пӗшкӗнсе,
Маҫеппӑна вӑратаҫ.

Пурт айĕнҫе тăнă пек,
Ват Маҫешшă сасартăк,
Шартах сиксе хăрарĕ.



Ку тĕлĕк пулĕ? Марийе,
Есĕ-и кунта Марийе?

Ун умĕнҫе хĕр тăрат:
Вăрăм ҫивти сӳтĕлнĕ;
Путса ларнă куҫĕсем
Йăлтăртатса пăхаҫҫĕ;
Ҫĕтĕк-ҫурăк кĕпепе,
Питĕ наҫар, хытанка,
Сăнĕ-пуҫĕ шап-шурă;
Тулли уйăх ҫуттипе
Тĕлĕнмелле ҫутăлат...
„Ку тĕлĕк пулĕ?.. Марийе"...
„Есĕ-и кунта, Марийе"?..

**М а р и й е:**

Ах, хулленрех!
Савнă тусăм, хулленрех!
Атте-анне хаљ анҫах,
Куҫа хупса, тĕлĕрҫĕҫ.
Кăшт кĕт... тăхта... хаљ пире...
Пултараҫҫĕ халĕ илтме...

**М а ҫ е п п ă:**

Марийе... Мĕскĕн Марийе!
Асна ил-ха! Ах, туррăм!
Ку мĕн пулҫĕ санпала?

**М а р и й е:**

Итле, йепле пит ҫейе!..
Калаҫаҫҫĕ пит ҫейе!
Вĕсен сăмах кулăшла?
Анне мана каларĕ,
Ҫын пĕлмен ĕҫ вырăнне:
„Мĕскĕн аҫу вилҫĕ" тет.
Кăвак пуҫа кăтартрĕ,

Хуллен, вăрттăн кăтартрĕ
„Аçун пуçĕ акă“, тет.

Ах, ай, туррăм! çăл мана.
Хайар усал ђĕлхерен
Ăçта тарса пурнасах?
Ăçта иксĕмĕр тарăпăр?
Шухăшла-ха: çук, вăл пул—
Етем пуçĕ пулмарĕ,—
Кашкăр пуçне кăтартрĕ.

Ак куратăн йепле вăл—
Анне мана улталаť:
Мана хĕн кăтартнăшăн
Намăс мар-и аннене?
Мĕншĕн-ха вăл улталаť?
Пайанхи кун санпала
Хăйне прахса тарасран!..
Апла пулас ĕç-и вăл“?..

Хĕре тискер савакан
Ђунтан, тĕппе кулђанса
Итлет хĕрĕн сăмахне
Хĕр пуçĕнђе шухăшсем,
Çавра çил пек, вĕçеççĕ.
Каллех çапла калаçаť:
„Анђах мĕнле пулсан та
Еп астăвап аслă хир...
Праçнăк сасси... шавлани...
Халăх ушкăнне астăвăп...
Еп астăвап вăл куна,
Вилнĕ çынсен пўсене...
Вăл праçнăке еп пытăм.

Мана унта—вăл хире
Анне йертсе çитерђĕ...
Унта сана курмарăм,
Вăл вăхăтра ăçта пултăн?
Мĕншĕн халĕ унтанпа,
Хура тĕттĕм çĕрсенђе,
Сансăр пуçне—тăр пĕђђен,
Çапкаланса çÿретĕп?
Киле пĕрле кайăпăр.
Ђасрах айта... каç пулђĕ...
Ах, еп курап—ман пуçăм
Пуш шухăшпа пăтранаť.
Сана, ват çын, йышăнтăм,—
Тус вырăнне йышăнтăм,
Палламасăр йышăнтăм.
Есĕ ман тус мар иккен.
Ах, кай кунтан пăрахса!
Санăн куçу пит хрушă,
Мăшкăласа пăхатăн.
Есĕ тискер, хитре мар.
Савнă тусăм хитређђĕ!
Ун куçĕнђе йуратни,
Ађашласа йуратни
Йăлтăртатса кураť-ђĕ;
Ун сăмахĕ ырăђђĕ,—
Ађашлакан ырăђђĕ.
Ун майхисем шап-шурă,
Шур йуртан та шурăђђĕ.
Сан майхусем апла мар:
Кĕçекленсе, йунпала
Вараланса, хĕрелнĕ“.



Тискер сасăпа кăшкăрса, ахăлтатса кулса йан.

Çапла сăмах калаçа,
Тискер саспа кăшкăрса,
Ахăлтатса кулса йан.
Çамрăк, çăмăл пăлан пек
Çăмăл сиксе мĕскĕн хĕр
Ђупса тарнă тĕттĕме.
Çĕрхи тĕттĕм ăшĕнђе
Вăл çухалнă ĕмĕре.



Çĕрхи тĕттĕм сайралать.
Хĕвĕл-ђухăç хĕрелет.
Çулăмланса вут çунать.
Вăл вут çинђе хуранпа
Çакă таркăн хусахсем
Ирхи апат тумашкăн
Вĕретеççĕ вир пăтти.

Тнепӑр шывӗ хӗрринђе.
Йӗнер хывнӑ утсене
Шӑвараҫҫӗ трапантсем[1]).

Карл ыйӑхран вӑранђӗ:
„Охӑ! вӑхӑт, тӑр, хӑвӑрт!
Тӑр, Маҫеппӑ, тул ҫутлат̆“.
Кетмӑн тӑни паҫӑрах.
Тунсӑх хуйӑх ун ђунне
Ҫийет, кӑшлат̆ пӗтӗмпех.
Ӑшра сывлӑш пӑђӑхат̆.

Ним ђӗнмесӗр лашине
Кетмӑн тытса йӗнерлет.
Каллех таркӑн корољпе
Вӑл сиктерет малалла.
Ђиккипеле тӗл пулса,
„Сыв пул“ туса иртнӗ ђух,
Хӑруш тискер куҫӗпе
Йалкӑштарса ђуптарат̆.

Ҫӗр ҫул иртрӗ унтанпа.
Мӑн кӑмӑллӑ, хӑватлӑ,
Тулли, вӗри шухӑшлӑ,
Вайлӑ, ђаплӑ ҫынсенђен

---

[1]) Трапантсем тесе йеншӑхсене калаҫҫӗ (ђура майлӑ [illegible]-кансем).

Мĕскер йулҫĕ тĕнҫере?
Вĕсен тантăш халăхсем,
Çил-тăвăл пек шавласа,
Ъртсе кайнă тĕнҫерен.

Çил пек, пĕрле—хăйсемпе:
Вĕсен йунлă йĕррисем,
Пур хуйăхсем пур ҫапсем,
Вăрçă вăрçса, хĕнесе.
Пур халăха çĕннисем—
Пĕтсе пурте çухалнă.

Анҫах Петĕр, мăн патша,—
Полтав вăрçи пуçлăхĕ,
Çур-çĕр йенҫи ҫап çĕрте—
Вырăс патшалăхĕнҫе,
Çын астуса пурăнма,
Аслă ĕçпе хăй валли,
Пысăк паллă-памĕтник
Туса лартса хăварнă.

Швет королĕ—ҫаплă Карл,
Полтав хули хирĕнҫе
Ҫапне уссăр çухатса
Туркă çĕрне ҫуптарнă.

Пентер-йатлă хулара
Ăссăр, ухмах етем пек,
Ҫурисемпе хастарлă
Пĕрте кĕрсе хупăнса,
Йаныҫарсен[1]) ушкăнпе—

---

[1]) Йаныҫарсем тесе туркăсен çарă халăхне калать.

Туркă çар халăхĕпе
Пĕҫҫен пуçăн çапăçнă.
Анҫах ÿкнĕ такăнса.

Хăй аллинҫи пунҫука
Туркă султан аллине
Панă вăйсăр парăнса.

Пентер хули хирĕнҫи
Çил армансем авăрса,
Хула тавра çÿрекен
Мăйракаллă пуйволсем[1])
Вăрçса вилнĕ çарăсен
Вил тăприсем йетĕрсе,
Ванҫăк кил-çурт йулашки,
Пÿрт умĕнҫи картлашка,
Мăк çитĕнсе йершĕрлĕ,
Путса ларнă картлашка
Карл пурăннă вырăна
Каласа хаљ ктартайĕ.

Çул çÿрекен тен йепле
Пырсан Пентер хулине
Кетмăн вилĕ тăприне
Шырасан та тупас çук:
Халăх манни Маçеппа
Пайтах вăхăт иртнĕ ĕнтĕ.

---

[1]) Пуйволсем тесе вăкăрсем майлă выљăхсене калаççĕ, вĕсем ăшă йенҫе пурнаççĕ, сайра тĕклĕ, хăлхисем усăк, мăйракисем кайалла авăнса çитĕнеççĕ.

Анђах таса кунсенђе
Çулталăкра пĕр тапхăр
Çултан-çулах Маçеппă
Тĕрĕс халах Маçеппă
„Анахвемă" кăшкăрат.

Пĕр айăпсăр хĕн курнă—
Искрăпала Кођупей,
Таса çынсем хушшинђе,
Халь Кейури лаврăра,
Канлĕ ыйăх çывраççĕ.

Йуман ушкăнĕ йĕркипе
Тикканкăра йешĕрет.

Йумансене ыр туссем,
Ыр çынсене асăнма,
Ӳсме лартнă ђыс туса,
Вăл йумансем пур çынна,
Ку таранђен пĕр майах,
Асап курнă çынсене
Астутарса лараççĕ.

Анђах ăçта Марийе—
Апшĕ-амăш сăмахне
Хисеплемен хĕр ађа?
Вăл хĕр çинђен никам та
Тĕппе пĕлсе калаймасть.

Апăрша хĕр асапĕ,
Унăн пурнăç, вăл сӳнни,—
Пиртен хура тĕттĕмпе
Хыт витĕннĕ хупланса.
Вăл тĕттĕме вăйпала
Çурса ăшне кĕрес çук,

Апăрша хĕр пурнăçне
Кĕрсе тупса курас çук.
Хăш ђух суккăр ват старик—
Украйнăри йур ăсти,
Йала кĕрсе çапăçсан,
Хура халăх умĕнђе,
Хĕлĕх çинђе йантратса,
Кетмăн çинђен йурласа.
Çак çылăхлă хĕр çинђен,—
Марийе çинђен пуплесе
Çамрăк хусах хĕрсене
Кала-кала кăтартаť.

